Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

1938
МАРТ
28
ТУНТИКУН
71 (4884)-мĕш №

# ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

## А. М. ГОРЬКИЙ

Горький—аслă вырăс халăхĕн аслă писателĕ кăна мар, вăл пĕтĕм прогреçсивлă етемлĕхĕн генийĕ. Чи малтан вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕпе, пĕтĕм шухăшĕ-ĕмĕчĕсемпе, литературăлă тата общественăлă ĕçĕсемпе—кĕскен каласан, пĕтĕм чунĕ-йупĕпе рабочи класăн писателĕ пулса тăрать. Вăл—пролетариатăн аслă писателĕ, пролетарилĕ литературăна пуçаракан, ăна пăхса ӳстерекенĕ.

Пирĕн аслă писател—Алексей Макçимăвич Горький, хăй те литературăна пролетарисен ретĕнчен пырса кĕнĕскер, буржуазине, капиталисăм пусмăрне, çынна çын експлоатацилес тискер йăлана, капиталисăмăн пĕтĕм тĕнчипе хирĕç тăракан çамрăк революцилĕ клас—çирĕп вăйхаллă пролетариат такçан авалтан пулнă пусмăра çапса çĕмĕрессине ĕненсе, пĕтĕм ĕçхалăхне çав хайар кĕрешĕве чĕнекен хастарлă çынсен сăн-сăпатне вырăс литературине пĕррĕмĕш хут илсе кĕнĕ. Вăл хăйĕн пархатарлă пултарулăхне малтанхи произведенисенчех ӳççăн кăтартса панă. Унăн мухтавлă пултарулăхĕ обществăн „айалти" сийĕсенче талантлă çынсем нумай пулнине питех те ĕнентерӳллĕн кăтартса парать. Талантлă çынсем нумай пулнă, анчах вĕсене патша влаçĕ ӳсме çул памасăр пăчăхтарнă. Горький—халăх хушшинчен тухнă талантсенчен пĕр ахахĕ çеç. Мĕн чухлĕ талант хăйсен пултарулăхне кăтартаймасăр, сарăмсăррăн пĕтсе нарнă-ши?

Горький те литературăна пушалăн пырса кĕнĕ. Вăл литературăна, дворйан писателĕсем пек, аслă шкулçенче вĕренсе килĕ пĕлӳсемпе пырса кĕмен. Унăн аслă шкул—пурнăç пулнă. Вăл мĕн ачаранах тĕнче касса çӳренĕ, вăл туса курман йăвăр ĕç пулман.

Горькине Российăра социалисăмла йĕрке тăвакан хăватлă рабочи клас суратнă, вăл революци йухăмĕпе килнĕ писател, тесен, пĕрре те йăнăш пулмасть. Мĕншĕн тесен, унччен вырăс литературинче „хура халăхăн" пурнăçне çав тери тĕрĕс ӳкерсе кăтартса паракан писател пулман. Дворйан писателĕсем „хура халăх" çинчен çырма йĕрĕннĕ. Хăйĕн произведенийĕсене халăх чĕлхипе çырма пуçăннă Пушкинтан та мăшкăланă, ăна хĕсĕрленĕ.

Горький литературăна пынă вăхăт—Ленинăн малтанхи литературăлă ĕçĕсем пичетленнипе, Российăри рабочи класăн малтанхи революцилĕ организацийĕсем пуçланнипе сыхăнса тăрать, вăл—рабочи класăн литературăри малтанхи представителĕ, революцилĕ çил-тăвăлăн йăхравçийĕ. Вăл Российăри рабочи класпа пĕрле, Ленинпа тата Сталинпа йунашар пырса, социалисăмла революцин аслă çулне, малтанхи массăлă çапăçусенчен пуçласа совет çĕршывĕнче социалисăмла пурнăçа туса çитериччченех, утса тухнă.

Алексей Макçимăвич, коммунис-революционер тата пролетарилĕ аслă писател пулса, пирĕн çĕршывра коммунисăм ĕçĕ пурнăçа ăнăçлăн кĕрсе пынишĕн, халăхсен культурлăхĕ тата çавăнпа пĕрлех çĕнĕ çынсем ӳснишĕн чĕререн савăнатчĕ. Çав вăхăтрах вăл пирĕн çĕршывăн тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла бандитсене пурнăçра икĕпитленекен, вараланчăк чунлă çынсене, социалисăм строительствине тĕрлĕ майпа чарма хăтланакансене хирĕç пĕтĕм вăйнех хурса çапăçатчĕ. Тăшмансемпе кĕрешнĕ çĕрте унăн пĕр принцип çеç пулнă: тăшман парăнмасть пулсан, ăна çапса çĕмĕрес!

Фашиссем çĕнĕ тĕнче вăрçи хатĕрленипе Горький мĕн пур революцилĕ хайарлăхпа питлетчĕ. Вăл, тĕнче культурин хайар тăшманĕпе—фашисăмпа кĕрешме тĕнче культурин пур маçтăрĕсен—писателĕсемпе поетсен тата ученăйсен конгреçне организацилес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлерĕ.

Горький çулне рабочи класăн çулĕнчен, большевиксен партийĕн çулĕнчен уйăрма çук. Çавăнпа ĕнтĕ либералсем, меншевиксем, тĕрлĕ реакционерсем пĕр каварлă пулса Горькийе хирĕç тăнă. Горький вĕсемпе кĕрешсе, творчествăри реалисăма, уçă та тӳрĕ шухăшсене, таса та тĕрĕс сăмахсене тата илемлĕ литературăн революцилĕ задачисене сыхланă.

Троцкисла-авербахла сутăнчăксем пролетари литературин генийне хирĕç пĕр майах кĕрешнĕ, тĕрлĕ майпа унăн хакне йӳнетме хăтланса, унăн творчестви çинчен елеклĕ статйасем пичетленĕ. Вĕсем, фашиссен йыттисем, хăйсен елеклĕ сăмахĕсене пĕтĕм совет общественнăçĕ хирĕçлесен, вăрттăн мелсемпе уçă курма пуçланă. Вĕсем—троцкиссем, бухаринецсем, зиновйевецсем тата фашиссен ытти тĕрлĕ ула-чăла йыттисем,—пирĕн çĕршывра тепĕр хут капиталисăм йĕрки туса хума каварлашнăскерсем, хăйсен çакă ирсĕр меслетне пĕтĕм тĕнче ĕçхалăхĕ умĕнче тăрă шыв çине кăларасран хăраса, Горькине емел парса вĕлернĕ.

Пролетарилĕ литературăн генийĕ вилчĕ, анчах унăн йачĕ ĕçхалăхĕн чĕринче ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ, унăн тăшмансемпе кĕрешме хавхалантарса тăракан произведенийĕсем нихăçан та вилмĕç.

Горькин произведенийĕсене пичетлесе кăларасси çултан çул ӳссе пырать. Патша правителстви аслă писателĕн революцилĕ шухăшсемпе тулнă произведенийĕсене пичетлеме шикленнĕ. Ун çинчен пайан пирĕн хаçатра пичетленекен „Горький тата патша цензури" йатлă статйари фактсем лайăх каласа параççĕ. 1897-мĕшпе 1916-мĕш çулсем хушшинче Горькийĕн произведенийĕсем пĕр мĕлйун екземплйар çеç тухнă пулсан, совет влаçĕ пулнă хыççăнхи 20 çул хушшинче вырăсла кăна 33.089.000 екземплйарпа 582 кĕнеке пичетленнĕ. Унсăр пуçне, Совет Сойузĕнчи ытти халăхсен чĕлхипе 3.834.000 пинлĕ тиражпа 500 кĕнеке кăларнă. Чăвашсен октаберпе çуралнă илемлĕ литератури те Горькин калама çук паха произведенийĕсемпе пуйанланчĕ. Совет Сойузĕнчи пур халăхсем те пĕтĕм тĕнче халăхĕн аслă писателĕн произведенийĕсене чĕререн йуратса вулаççĕ.

В. И. Ленин 1909 çултах Горький хăйĕн паха произведенийĕсемпе хăйне Российăри тата тĕнчери рабочисен йухăмĕпе çирĕп сыхăнтарнă, тесе çырнă. Революцилĕ пролетариатпа, унăн малта пыракан отрйачĕпе—большевиксен партийĕпе тачă çыхăннă Горький ӳссе пыракан вăрçă хăрушлăхне хирĕç тăнă, вăрçă пуçлакансене хайаррăн питленĕ, тăшмансем çинчен маскăна сӳсе илнĕ, фашисăмăн йунлă шухăшĕсене тăрă шыв çине кăларнă, халăхăн мĕн пур тăшманĕсене хирĕç ырми-канми кĕрешнĕ. Вăл—аслă писател, вăйлă художник, чаплă революционер тата чыслă гражданин. Вăл—пĕтĕм етемлĕх культурин генийĕ. Горький пек çынсен ĕçĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнаççĕ. Çавăнпа та пайан пĕтĕм çĕршыв вăл çурални 70 çул тултарнине аслă уйав туса паллă тăвать.

## ГОРЬКИН ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ МĔЛЙУНШАР ТИРАЖПА ПИЧЕТЛЕНЕÇÇĔ

А. М. Горькин питех те паха произведенийĕсем революциччен вулакансен анлă массисем патне çитеймен. Мĕншĕн тесен, аслă писателĕн кĕнекисене уйрăм издателсем пĕчĕк тиражпа çеç кăларнă. Вунтăхăр çул хушшинче—1897 çулпа 1916 çул хушшинче—Горькин произведенийĕсене пĕтĕмпе те мĕлйун екземплйар çеç кăларнă.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех Горькин произведенийĕсене массăлă тиражпа кăларма пуçланă. Унăн кĕнекисене пирĕн нумай нацилĕ тăван çĕршывăн пĕтĕм ĕçсынниисем вулаççĕ. Çирĕм çул хушшинче—1917 çулпа 1937 çул хушшинче—вырăс чĕлхипе кăна 582 издани кăларнă, вĕсен тиражĕ 33.089.000 екземплйар шутланать. ССР Сойузĕнчи ытти халăхсен чĕлхисемпе—500 издани кăларнă, вĕсен тиражĕ—3.834.000 екземплйар.

А. М. Горький вилнĕ хыççăн пĕр çулта кăна унăн произведенийĕсене 100 издани ытла кăларнă. Государствă литиздателствин Ленинградри уйрăмĕ кăна Горький вилнĕренпе пĕр çул тултариине паллă тунă йатпа 1.200 пин кĕнеке кăларнă.

Аслă писателĕн паллă кĕнекисенчен пĕри—„Амăшĕ" революци хыççăн вырăс чĕлхипе 38 издани, ССР Сойузĕнчи халăхсен 22 чĕлхипе—41 издани тухса саланса пĕтнĕ. Повеçĕн пĕтĕм тиражĕ мĕлйун çурă екземплйара йанăн пулнă. Алексей Макçимăвич произведенийĕсене пурĕ 58 чĕлхе çине куçарнă.

(ТАСС).

## ГОРЬКИН ЧĂВАШЛА ТУХНĂ КĔНЕКИСЕМ

Класçиксен чăвашла тухнă кĕнекисем хушшинче Горькин произведенийĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Революциччен Горький произведенийĕсене пĕрете куçарман пулсан, йулашки пилĕк çул хушшинче Чăвашиздат Горькин кĕнекисене—„Амăшĕ", „Йегор Булычĕв", „Васса Железновă", „Тĕпĕнче", „Ерхип мучипе Лйонйкă", „Йанварĕн 9-мĕшĕ", „Манăн университетсем", „Челкаш" произведенисене 26 пинлĕ тиражпа пичетлесе кăларнă.

Ку хисеп Горькин 1938 çулта тухакан кĕнекисен шучĕпе тата та ӳсет. Кăçал Чăваш издателстви Горькин пĕчĕк калавĕсен пуххине, „Фома Гордейĕв" романа, „Тăшмансем", „Туссем" йатлă произведенийĕсене 21 пинлĕ тиражпа пичетлесе кăларать.

Кусемсĕр пуçне совет влаçĕ пулнăранпа Горькин „Йанварĕн 9-мĕшĕ", „Çирĕм улттă тата пĕрре", „Çил-тăвăл йăхравçи çинчен хунă йурă", „Хĕрарăмсем", „Етем çурални" пек пĕчĕк калавсем чăвашла тухакан журналсемпе хаçатсенче нумай пичетленнĕ.

Мартăн 28-мĕшĕнче Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блокăн" шпионла банди тискеррĕн вĕлерпĕ вырăс аслă писателĕ Алексей Макçимăвич Горький çуралнăранпа 70 çул тултарчĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Алексей Макçимович Горький (1868—1936).

Е. Иевзерихин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

## В. И. Ленин Макçим Горький патне çырнă çыру

### (19) 08 ç. йанварĕн 15-мĕшĕ (Женева)

***Хаклă А. М. тата М. Ф.***

**Пайан Сирĕн пит те васкаса çитермеле йанă çырăва илтĕм. Сирĕн пата Капри утравĕ çине çитсе курасси тĕлĕнтермеле илĕртет, мур илешшĕ! Есĕр çав тери илемлетсе çырса пĕтерне те, туршăн та, пуçтарăнатпăрах тем пулсан та, хампа пĕрле арăма та ĕçрен татсах илсе тухма тăрăшăп. Анчах хăçан пырассине калама пултараймастăп-ха: халĕ „Пролетарий" хаçатра ĕçлемесен йурамасть, ăна ура çине тăратас пулать, ĕçе тем пулсан та майлаштарса йарас пулать. Çакна тума minimum пĕр-икĕ уйăх кирлĕ. А ĕçне тăвасах пулать. Çур тĕлнеле ĕнтĕ Капри шурă ерехне ĕçме тата Неаполе курма тата Сирĕнпе сăмах çапма пĕрсе çитĕпĕр. Сăмах майĕпе каласан, епĕ италйанецсен чĕлхине вĕренме пуçларăм та, вĕренекенскер вырăнĕнче ĕнтĕ тӳрех италйанецсен чĕлхипе Марийă Федорăвнă çырнă адрĕс çине тăрăнтăм: expresso вырăнне expresso! Парăр-ха, пăхар, терĕм, словар çине.**

**Ну, а „Пролетарийе" турттарса кайасси пирки Есĕр ăна хăвăр пуçăр çине йăвăрлăх тийес тесе çырнă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн аларан çăмăллăнах вĕçерĕнсе тухаймăр. М. Ф-на халех пĕр купа ĕç пама тивет:**

**1) Российăпа Итали хушшинче çӳрекен пăрахутсем çинчи служăшчисемпе рабочисен сойузĕн (çавăн пек сойуз пулма кирлĕ) çекретарне тем пулсан та тупмала.**

**2) Çав çынран, пăрахутсем ăçтан тата ăçта мĕнле час-час çӳренине пĕлмеле. Тем пулсан та кашни ернере пирĕн хаçата турттарса каймала пултăр. Мĕн чухлĕ тăрать турттарса тăма? Пире валйи тăпăр-тăпăр çынна тупса патăр (италйанецсем хушшинче тăпăр-тăпăр çынсем пур-и?). Хаçатсене тăратма Российăра (калăпăр Одессăра) вĕсене адрес кирлĕ-и, йе нумайах мар хаçата вĕсем вăхăтлăха Одессăри пĕр-пĕр италйанец-трактиршчик патĕнче тытса усрама пултарĕç? Ку пирĕншĕн пит те пысăк ыйту.**

**3) М. Ф-шăн хăйĕншĕн çакна пурне те майласа йама, вăй хурса тăрăшма, шыраса тупма, ăнлантарса пама, тĕрĕслесе пăхма т. ыт. тума май çук пулсан, ан тив, вăл тем пулсан та пире çак çекретарпе тӳррĕмĕнех çыхăнтартăр: епĕр вара унчухне унпала çыру çырса çыхăнăпăр.**

**Ку ĕçпе васкас пулать: шăпах 2—3 ернерен кунта „Пролетарий" кăларма тытăнасси çине шанатпăр, ăна вара вăхăта тăсмасăрах йарас пулать.**

**Ну—Капри утравĕ çинче куриччен.**
**Астăвăр, А. М., сывлăхлă пулăр.**

**Сирĕн В. УЛЙАНОВ.**

## Горький йубилейĕ пединститутра

Пайан вырăссен аслă писателĕ Макçим Горький çурални 70 çул тултарать. Горький халăх тăшманĕсен тискер ĕçĕ пирки икĕ çул кайала вилсе кайрĕ. Анчах Горький вилнĕ пулсан та унăн ĕçĕ нихçан та вилес çук. Вăл çырнă кĕнекесене пĕтĕм тĕнче ĕçхалăхĕ вулать. Пирĕн Совет Сойузĕнче кашни рабочи, хресчен, совет интеллигенцийĕ Горький произведенийĕсене хăйĕн тăван чĕлхипе вулать.

Пединститутри студентсем, литкружок членĕсем йубилей кунĕсенче спектакăл лартма Горькийĕн „Тĕпĕнче" пйесине хатĕрлерĕç. Кунсăр пуçне читалйнăйра Горький пурнăçĕпе творчествине кăтартма пысăк выставкă тунă, литературă бӳллетенĕсем, çтена хаçачĕсем кăларнă. Литкружок членĕсем тăвăл йăхравçи тата сокăл çинчен хунă йурăсене пăхмасăр калама вĕреннĕ. Макçим Горький йачĕпе пулакан вечĕрта аслă писателĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен вырăс литературине вĕрентекен преподавател Сутйагин йулташ доклад туса парать. Литкружок членĕсем Горькин хăшпĕр произведенийĕсене вуласа параççĕ.

Ник. Дедушкин.

## СОЦИАЛИСĂМЛА ЕЛЕКТРОФИКАЦИНЕ МАЛТИ ВЫРĂНА КĂЛАРАР!

### Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн електростанцисемпе електросет работникĕсен мартăн 14—20-мĕшĕсенче пулса иртнĕ Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕ чĕнсе калани чен

Епĕр, канашлура пулнисем, çак чĕнӳре большевикла тӳрелĕхпе çапла калатпăр: Сталинла иккĕмĕш пйатилеткă çулĕсенче районри електростанцисен вăйĕ икĕ хут ӳснĕ тата малта тăракан техникăлă çĕнĕ електроцентралйсене ĕçе кĕртнĕ пулин те, електростанцисем ку таранччченех çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ-ха.

Государствăн електроенерги туса кăлармали 1937 çулти планне 89,4 процент çеç тултарнă. Тепенерго-електростанцисем 1937 çулта çунтармали йапаласене палăртнинчен 580 тоннă нумайрах çунтарнă тата хăйсен нушисене валйи нормăран иртсе 173 мĕлйун киловат-сехет електроенерги расхутланă.

Електростанцисемпе електросетсенче аварисем, пуринчен ытла унта ĕçлекенсен айăпĕпе, пит нумай пулаççĕ. Кăçал малтанхи икĕ уйăх хушшинче те епĕр хамăр ĕçре татăклă улшăну тăвайман-ха.

Електростанцисенчи работниксем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн 1935 çулти декабĕрте пулса иртнĕ Пленумĕ енерги хуçалăхĕсенче стахановла йухăма вăйлатмали çулсене кăтартса парса йышăннă решенисене те пурнăçа кĕртсе çитермен, енерги хуçалăхĕсенчи командирсем стахановецсене йертсе пыракан организатăрсем тата руководителсем пулса тăман-ха.

Хуçайственниксем, инженерсемпе техниксем тата партипе профсойуз организацисем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн 1937 çулти феврал-март уйăхĕсенче пулса иртнĕ Пленумĕнче Сталин йулташ кăтартса панинчен ку таранччен те кирлĕ вывăдсем туман-ха, троцкисла-бухаринла-рыкăвла йапон-нимĕç шпионĕсемпе диверсантсен сăтăрла ĕçĕсен сийенĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман.

**Йулташсем-енергетиксем!** Епĕр йăвăр индустрин чи паха участкинче ĕçлетпĕр. Електростанцисем—вĕсем халăх хуçалăхĕн чĕри. Троцкисла-бухаринла-рыкăвла шпионсемпе диверсантсем, фашисла разведкăсен пур агенчĕсем те пирĕн çĕршывăн енерги базине çĕмĕрсе тăкма, социалисăмла тăван çĕршывăн оборонине вăйсăрлатма тăрăшнă. Анчах тăшмансен ĕçĕ тухмарĕ. Вĕсен йăвисене çĕмĕрсе тăкнă, фашисла кайăшсене тĕп тунă. Сыхă пулар! Сăтăрлăхăн йулашкисене тĕпĕ-тымарĕпех пĕтерер, хамăр çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрле сутăнчăк троцкисла-бухаринла шпионсене хамăр тăван çĕршыв çинчен шăлса пăрахар. Хамăр електростанцисен алăкĕсене тăшмансем кĕрейми çирĕппĕн хупса хурар.

Епĕр, канашлура пулнисем, енергетикă работникĕсене пурне те сăтăрлăхăн сийенĕсене хăвăрт пĕтерессишĕн тата електростанцисемпе електросетсенче стахановла йухăма массăлăн сарассишĕн тимлĕн ĕçлеме чĕнетпĕр.

Пирĕн 1938 çулти плана тултарма тата иртерсе тултарма пур условисем те çителĕклĕ. Електростанцисенче ку тарана çитсе те çунтармали йапаласене тата електроенергине перекетлемели пысăк резервсемпе усă курман-ха. Технологилĕ оборудованин уйрăм пайĕсене тĕрĕс йĕркелени çĕршыва кăçал хушса 144,8 пин киловат енерги пама пултарать.

Тĕп оборудованипе усă курассине оборудованине йусанă тата ревизи тунă чухнехи простойа чакарнипе, гидростанцисемпе туллин усă курассине организациленипе, потребителсене енерги парассине йĕркеленипе ӳстерме пулать.

Енергетикă ĕçĕнче тĕрĕсленнĕ, Ленин—Сталин партине пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлекен работниксем нумай. Пирĕн, малта пыракан çынсем çине тайăнса, аварисем пулассине пĕтермеле, оборудованисене йусассине çирĕп график тăрăх организацилемеле, ĕçе организацилĕнĕ çĕрти çитменлĕхсене пĕтермеле, дисциплинăна çирĕплетмеле, електростанцисен ĕçĕсемшĕн, потребителсене електроенерги йаланах парса тăрасишĕн енергетикăра ĕçлекен кашни работникĕн ответлăхне ӳстермеле.

* * *

Малала чĕнӳре електростанцисенче ĕçлекенсене оборудованисемпе уса курас ĕçри аварисемпе простойсене пĕтерме, аварисене хирĕç кĕрешмели ĕçсене срукра пурнăçа кĕртме, оборудованисемпе тухăçла усă курма тата електроенерги çителĕклĕ парса тăма май паракан усăлă йĕрке туса ăна лайăххăн тата тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пыма чĕнни. Чĕнсе калани йусав ĕçĕнче ĕçлекенсене йусав ĕçне пысăк пахалăхпа тата график тăрăх тума чĕнет. Оборудованисене йусанă чухне пулакан простойсен хисепне иртнĕ çулхипе танлаштарсан 10 процентран кайа мар чакармала.

Унтан електростанцисенчи кочегарсене, гидростанцисен работникĕсене, командирсемпе инженерлатехникла работниксене т. ыт. те. уйрăмах чĕнсе каланă.

Вара чĕнӳре çакăн пек каланă.

— Електростанцисен, хамăрăн чечекленекен çĕршыва електроенерги мĕн чухле кирлĕ таран памала. Епĕр пирĕн умма йурăтнă Сталинла халăх комиссарĕ—Л. М. Каганович лартнă задачăна пурнăçлатпăр, енергетикăна кĕске вăхăтрах халăх хуçалăхĕн малти ретне кăларатпăр.

Стахановла йухăма анлăн сарса йарар! Социалисăмла ăмăрту йалавне çуле çĕклер! 1938 çулхи плана пур йенĕпе те тултарар! Електростанцисен ĕçĕнче çĕнĕ çĕклену тăвар!

## Чăваш АССР X-мĕш созыври Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн X-мĕш Çеççине пухасси çинчен

### *Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн Президиумĕ йышăннă*

### *ПОСТАНОВЛЕНИ*

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш АССР X-мĕш созыври Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн X-мĕш Çеççине 1938 çулти апрелĕн 3-мĕшĕнче, Шупашкар хулинче пухас.

2. Çеççин кун йĕркине çак ыйтусене çирĕплетес:

1) Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ.

Докладчик—Л. С. Спасăв йулташ.

2) Чăваш АССР 1938 çулхи бюджечĕ.

Докладчик—И. З. Захарăв йулташ.

Содоклад—Бюджет комиççийĕ.

3) Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă постановленисене çирĕплетесси.

Докладчик—Т. В. Ваçилйĕв йулташ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ **С. КОРОТКОВ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ **Т. ВАСИЛЙĔВ.**

Шупашкар хули.
1938 çулти мартăн 25 мĕшĕ.

## Бюджет комиççине пухасси çинчен

### Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн Бюджет комиççине 1938 çулти мартăн 31-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ **С. КОРОТКОВ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ **Т. ВАСИЛЙĔВ.**

Шупашкар хули,
1938 çулти мартăн 25-мĕшĕ.

# Аслă совет писателĕ А. М. Горький çурални 70 çул тултарчĕ

## *Аслă совет писателĕ А. М. Горький*

(В. Кирпотин статйинчен)

Горький Ленин çинчен çапла çырнă: „Владимир Ленин вилчĕ. Ун ăсхакăлĕпе ирĕкĕн пурнăçра йулнă ĕçĕсем—чĕрĕ, чĕрĕ тата çав тери ăнăçлăн ĕçлеççĕ, ун пек халиччен тĕнчере никам та, нихăçан та, ниçта та ĕçлемен-ха".

Горький Ленинпа хĕрўлĕн йуратса çыхăнса тăнă, çавăн пекех вăл Сталинпа та хĕрўлĕн йуратса çыхăнса тăнă. Сталина вăл „калама çук пысăк чĕрелĕ те пысăк ăслă çын" тесе хакланă. Вăл хăй „Владимир Илйич Ленин генийĕпе çуталса тăракан çĕршывра, Иосиф Сталинăн тимĕр пек çирĕп вăйхалĕ ывăнма пĕлмесĕр тата тĕлĕнмеле чаплăн ĕçлекен çĕршывра" пурăннипе мухтаннă. Горький пĕлнĕ: хамăрăн аслă çĕнтерўсемшĕн епĕр „пире пурне те йертсе пыракан Иосиф Сталинăн аслă политикине" тав тума тивĕçлĕ.

Капиталисăмăн троцкисла-бухаринла агĕнчĕсем, Ленин çине алă çĕкленĕскерсем, фашисла ирсĕр çĕленсем, Сталина вĕлерме шухăшласа хунăскерсем, аслă писателе Горькине вĕлерчĕç. Вĕсем ăна вăл Ленинпа Сталинăн шанчăклă тусĕ пулнăшăн, вăл коммунисăм ĕçĕшĕн вут-хĕмлĕн кĕрешекен çын пулнăшăн, вăл халăх тăшманĕсене хирĕç шеллевсĕр те хĕрхенўсĕр кĕрешнĕшĕн вĕлернĕ. Çавăн пекех унăн йуратнă ывăлне те вĕлернĕ.

Горький татах пурăннă пулĕччĕ, унăн сăмахĕсем фашиссеçе, вĕсен троцкисла-бухаринла тарçисене халиччентхи пекех намăспа питленĕ пулĕччĕç. Капиталисамла тĕнчене, иртнĕ кивĕ пурнăçа Горький курайман. Социалисăма хирĕç кĕрешес ĕçре кивĕ тĕнче вăйĕсем чи хура мелсемпе ĕçлеме тытăнассине те вăл пĕлсе тăнă. Тăван çĕршыва сутакансене Горький вутçулăмла курайманлăх сăмахĕсемпе питленĕ.

Горький, фашисăма тара кĕрешнĕ ирсĕрсем—капиталисăм тĕнчин кайашĕсем мĕн тери ирсĕр ĕçсем патне çитме пултарассине питĕ лайăх пĕлнĕ. 1935 çулта, С. М. Кирова тискерĕн вĕлернĕ хыççăн, Горький çапла çырнă: „Çын—çутçанталăк илемĕн чапĕ", вăл „мухтавлăн йанраť", ун пирки тавлашма кирлĕ мар, анчах вăл ирсĕр, пролетариатăн çулпуçĕсене вĕлерекен, тăван çĕршыва сутакан, тĕлĕнмеле икĕпитленекен, рабочи клас тăшманĕ, капиталисăм шпионĕ пулма пултарни пирки те тавлашма кирлĕ мар,—вăл çавăн пек пулнă чухне ăна пĕр шеллемесĕр пĕтерес пулаť".

Вăл ирсĕр çĕлен-калтасен хăйсен йĕрки пур. Вĕсем пĕр-пĕрин çине усаллăн пăхаççĕ, çав бандăран хăше те пулин теприсенчен мала ан тухчăр, „пысăк çынна", „министра" сиксе ан тухтăр тесе шикленеççĕ. Вĕсем, малти ретсене хĕсĕнсе тухас тесе, пĕр-пĕрин пырне кăшласа татма та хатĕр. Сутăнчăк çынсен çак ирсĕр психологине Горький „Жизнь ненужного человека" произведенинче уçса парса, тăрă шыв çине кăларнă. Икĕ пĕчĕк шпик „пысăк кайăк" çине, паллă провокатăр çине ăмсанса пăхаççĕ.

Троцкий, Рыкĕв, Йагодă, Тухачевский тата ытти бандитсен кĕлеткипе сăн-сăпачĕ те çавăн пекех... Вĕсем министра кĕрсе ларма ĕмĕтленнĕ обер бандитсем, капиталисăмăн шанчăклă тарçисем пулнă.

Хăйĕн пирвайхи произведенийĕсенчен пуçласах Горький капиталисăма хирĕç, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнакансене хирĕç, социалисăмшăн тăнă.

Социалисăмшăн кĕрешнине пит те уççăн кăтартса паракансенчен пĕри—Горькин „Враги" йатлă пйеси пулса тăраť. Вăл пйесăра: „Вăл çынсем çĕнтереççех!"—тесе пророкла калаť рабочисем çинчен Горький. Вăл çынсем аслă Октабĕр штурмĕнче çĕнтерчĕç, вĕсем Ленинпа Сталин йертсе пынипе çĕнтерчĕç.

Горький литературăна Ленинпа Сталин сăмахĕсене, идейисене, туйăмĕсене илсе кĕнĕ.

Горький пролетариатăн аслă художникĕ, вăл—пĕтĕм тĕнчене капиталисăмла тискерлĕхрен хăтарма тивĕçлĕ пулнă класăн ирĕкне илемлĕ çырулăхра пуринчен те вăйлăрах кăтартса панă çын.

Çĕнĕ тĕнчен çуралса тухакан куљтури тискеркайăкла буржуазин кивĕ куљтури умĕнче калама çук пысăк пахалăхлă, чаплă иккенне вăл хăйĕн опăчĕпе, хăйĕн илемлĕ çырулăхри пултарулăхĕпе кăтартса панă.

Çĕнĕ класăн сăн-сăпатне, çĕнĕ самана сăн-сăпатне етемлĕхĕн художествăлă аталанăвĕ çинче кăтартса паракан пулса тăрса, Горький хăйпе пĕрле искусствăна çĕнĕ сăмах илсе кĕнĕ. Горький, ĕмĕрех тўрĕ пулма тата выççисемпе пусмăр тўсекенсене ĕмĕрех хăйсен аллинче тытса пурăнма шутлакансем тунă тамăкăн чи тĕпне пăхса илнĕ. Вăл социалисăм хăйпе пĕрле илсе килме пултаракан лайăх, чăнчăн етем пурнăçне ĕненнĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче Российăра ўссе пынă пролетарилĕ революцин йухăмĕ Горькине тĕлĕнмеле, вăйлă революцилĕ-романтикăлă произведенисене—„Буревестник", „Песня о Соколе" тата ыттисене çырма хавхалантарнă.

Халăх хушшинче Горький чи йăвăр условисенче те иккĕленмен, кĕрешўри пултарулăха çухатман, çутă та вăйлă характĕрсем, çынсем тупнă. Малтанхи вăхăтра Горький çакă протеса Челкашсенче, Масвăсем пек боçаксем ăнланмасăр тунă пек кăтартнă. Унтан вара, марксисăм вĕрентĕвне ăнланса илерехпе, бољшевиксен партинчен вĕренсе пырса, „вăл,—телейсĕр пурнăçпа пусмăр тўсекенсен хĕснĕ прависемшĕн хирĕçекен чи харсăр, чи çирĕп çынсем—революцилĕ рабочисем пулса тăнине ăнланса илнĕ.

Горький бољшевисăм шкулĕ витĕр тухнă, вăл Ленинпа Сталинран вĕренсе пынă, вăл класлă кĕрешўре вĕсемпе пĕрле ĕçленĕ. Çакăншăн ĕнтĕ ăна меншевиксем йуратман, Иуда-Троцкий курайман.

Ленинпа Сталин пролетарилĕ аслă писатĕл çине йаланах пысăк йуратупа пăхнă, унăн калама çук пысăк та ăшă кăмăлпа тăрăшнă. Вĕсем ун произведенийĕсен илемлĕхĕпе идейин тивĕçлĕхне калама çук пысăк хак панă. „Горький—çырнă Ленин,—паллах, пролетарилĕ искусствăн пысăкран та пысăк представителĕ... Горький—пролетарилĕ искусствăн ĕçĕнче авторитет пулса тăраť, кун пирки нимĕн тавлашу та пулма пултараймасť".

„Сылтăмла-троцкисла блокри" фашисла çыйвĕлеренсем тăван çĕршыва сутнипе унăн куљтурине тăвакан аслăран та аслă çынна вĕлересси умĕнче те чăрăнса тăман. Горький произведенийĕсене Гитлĕр çунтараť. Йагодă тата унпа пĕрле пулнă ирсĕрсем, Гитлерпа унăн приказчикĕ Троцкий хушнипе, Горькине хăйне те вĕлернĕ.

Социалисăм строителĕствин çулĕсенче Горький хăйĕн хăватлă таланчĕн пĕтĕм вăйĕпе совет çыннине, вĕсен аслă ĕçĕсене мухтанă, тата çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерўсем патне, Советлă Республикăсен Сойузĕнчи пĕтĕм ĕçхалăхне çăмăл, пуйан та куљтуралă тата хаваслă пурнăç патне паттăрăн йертсе пыракан Сталин йулташпа, унăн соратникĕсене мухтанă.

Ленин—Сталин партийĕ пăхса ўстернĕ çĕнĕ çынсем—Горькин нумай йышлă статйисемпе очеркĕсен тĕп теми.

Горький пурнăçа йуратнă, çынсене йуратнă. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ вăл ĕççыннисен тăшманĕсене, социалисăм тăшманĕсене курайман. „Тăшман парăнмасť пулсан,—ăна пĕтереççĕ"—Горькин çакă сăмахĕсем çынна тарăнăн йуратнипе тулнă.

Аслă вырăс писателĕн çак сăмахĕсем—ăна вĕлерекенсемшĕн çырнă пригăвăр. Ана вĕлерекенсене истори çўп-çап шăтăкне кăларса ывăтрĕ, анчах Горькин йачĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ.

# АСЛĂ ГУМАНИС

Горький вырăссен тата пĕтĕм тĕнчери халăхсен класçикла литеритурин чи аслă гуманисĕсенчен пĕри пулнă.

Гуманисăма буржуази ўççăнах пăрахăçланă вăхăтра, буржуалă литературă етемлĕх сăнĕ çине сурса, етемлĕх хаклăхне сухатасшăн тапăçланнă вăхăтра, Горький гуманисăм йалавне, çынна тата етемлĕхе сыхлас йалава çўлĕрен-çўле çĕкленĕ.

Буржуалă строй ишĕлме пуçланă епохăри литературă етеме нимĕн тĕшне те тăман пек туса кăтартма тапаçланнă, çав вăхăтрах „господасен" ирĕксĕрлĕхне мухтаса, вĕсем ĕççыннисене тĕрĕссипе курайманçĕ, вăл çапла пулмала, тесе кăшкăрнă.

Горький етеме мухтаса савăнăçлă йурă йурланă, вăл етемĕн ăслăлăхне, хăватлă пултарулăхне, ăслăхăхне, унăн телей патне туртăнакан ирĕклĕхне мухтанă.

Вырăссен класçикла литератури чи малтан хăйĕн гуманисăмĕпе паллă вырăн йышăнса тăраť. XIX-мĕш ĕмĕрти вырăссен литературинче пĕтĕмпех кўренйĕ çынсен тивĕçлĕхĕшĕн кĕрешĕве чĕнекен кĕвĕ йантăраť. Некрасăв, Салтыков-Щедрин пек аслă писателсен произведенийĕсенче ку кĕвĕ пĕтĕм пусмăрлăха тата пĕтĕм мăшкăллăха сивлесси патнех çитет.

Çак аслă гуманисăмăн традицийĕ çине буржуалă литературă сурса, ăна пылчăк ăшне таптанă тапхăрта та Горький çав традицишĕн чĕрине парса, ăна тепĕр хут çĕнетсе çĕклет. Анчах Горькийĕн гуманисăмĕ—класçикла гуманисăма малала тăсни кăна мар, вăл вырăссен тата пĕтĕм тĕнче литературинче чи малтанхи хут йантăракан çĕнĕ сăмах пулнă.

Горький хăйĕн творчествинче тĕп геройĕ вырăнне пысăк, вăйлă çынна, пурнăçăн чăп-чăп хуçине, çĕрĕн вăхăтлăх хуçисен мăшкăлне тўссе тарăхнăскерсене, кăларса тăратнă. Çав геройа Горькин хăйĕн сăмахĕпе палăртса хăварма пулаť: „Вăл—çĕнĕ етемлĕхĕн çынĕ—пысăк, чăрсăр та вăйлă, çавăнпа та вăл кивĕ тĕнче çыннисемшĕн хăрушă".

Горький хăйĕн малтанхи калавĕсенчех вăл камшăн тата кама хирĕç кĕрешни çинчен уççăн та тўррĕн каланă. Изергиљ карчăк çинчен хунă йумахра икĕ образ хире-хирĕç тухса тăраççĕ: пĕри, вăл—халăх тăшманĕ, ĕмĕтсĕр-индивидуалис Ларр, тепри—паттăр Данко, кăкăртан чĕре тăпăлтарса, ăна факĕл пек çўлĕ çĕклекенскер, çав факĕл çутипе çынсене ирĕклĕх патне çул кăтартаканскер.

Данко образĕ Горький умĕнхи литературă сăнласа панă, кўреннĕ пĕчĕк çынсен образĕпе те пăртак сыхăннă. Данко вăйĕпе Ларртан кайа мар, анчах унăн йуратăвĕ урăхла, вăл çынсене аслă йуратупа йураťаť, унăн йуратăвĕ те паттăр çынăн йуратăвĕ, вăл „лăпланма шутлакан çынăн" йуратăвĕ мар, кĕрешў çыннин йуратăвĕ.

Горький хăйĕн мĕн пур творчествинче çаканашкал тĕп геройăн моралĕ йĕнĕсене малтанласа Челкаш йе Данко пек романтикăлă образсенче йе тата „Макар Чудрари" ирĕклĕхе йуратакан цыгансем урлă кăтартнă. Малала вара, çĕршывра рабочисен йухăмĕ сарăлса пынă май, Горький хăйĕн тĕп геройне тупнă, вăл герой—революционер, капиталисăмпа харсăррăн кĕрешекен çын, бољшевик. Çак геройăн образĕ унăн вăйланнă çемĕн вăйланса пынă. Еçе ирĕке кăлармала, вара етем те ирĕке тухаť, тенĕ вăл.

Общĕствăлă ĕçĕн телейлăхĕ çинчен Горький пек вăйлăн хавасланса йурлакан художниксем, Горький каланă пек, тунă ĕçщĕн хавхаланакансем, тĕнче литературинче питех те сахал. Ĕç хаваслăхне сухатнишĕн, творчĕствăлă ĕç правине капиталисăм туртса илнишĕн мĕлйун çынсем хурланса макăрнине пĕлтернĕ Горький. Горький творчĕстви ĕçĕн паттăр поезийĕ пулса тăраť. „Фома Гордейĕвран" пĕр сценине çеç, баржăсем туртса хăпартакан сценăна аса илер, йе „Манăн университетсенчен" çавăн йевĕрлĕ пĕр сценăна илер, вĕсем ĕç çинчен хунă аслă поемă пек йанăраççĕ.

Горький çынăн хакĕ, унăн пултарулăхĕ, унăн вăй-хăвачĕ ĕçре çеç палăрма пултарнине кăтартса панă.

Сталин йулташăн 1935 çулхи майăн 4-че Хĕрлĕ Çар академикĕсене кăларнă чухне каланă сăмахĕ ĕçчен етеме нихăçан пулмăн тўпене çĕклерĕ, вăл сăмах етемлĕхĕн чи лайăх çыннисен чи лайăх ĕмĕчĕсем социалисăм çĕршывĕнче пурнăçланнине кăтартрĕ. Вăл сăмаха пĕтĕм тĕнче ĕçхалăхĕ пысăк хавхаланупа, чĕрине пысăк шанăç хурса, итлерĕ.

Питĕ те ăнланмала, Горький йалан çĕнĕ етемлĕх çуралса çитĕнессине ĕмĕтленсе пурăнаканскер, çав ĕмĕте пурнăçа кĕртнĕ çĕршыва сыхлассишĕн чунне пама хатĕр пулнă. Чирлĕ, вилĕм умне çитнĕ Горький, Сталинла Конституци проекчĕпе паллашнă хыççăн, халĕ ĕнтĕ çĕршывра чулсем те йурлаççĕ, тенĕ... Ку унăн çĕршыв çинчен, пултарулă халăх çинчен каланă йулашки сăмахĕ пулнă. Алексей Максимăвичăн йулашки шухăшĕсем Сталинпа, унăн ĕçĕсемпе, сталинла тапхăр çитĕнтернĕ çынсен çĕнтерĕвĕсемпе çыхăннă...

Çакăншăн ĕнтĕ ăна урнă тăшмансем тискер кайăклах курайман. Горький вĕсене, буржуалă тĕнчен кашкăрĕсемпе çыснисене кураймасăр пурăннă. Горький ĕçчен етемлĕхе йуратма пултарнă вăйĕ унăн етемлĕх тăшманĕсене чĕреренех курайманлăхĕн вăйĕпе тапласшă.

Горький сисĕмлĕ пулма чĕннĕ, вăл хăйĕн статйисенче ун пирки сахал мар асăрхаттарнă: „Советсен Сойузĕнче тăрă шыв çине тухайман тăшман—йутçĕршыв-сенчи тăшмансен чи сывăх тусĕ пулса тăраť. Вăл—ирсĕр сăтăрçă, сутăнчăк, елекçĕ тата сăмах вăрлавçи, вăл—меньшевиксем пекех, пирĕн советла чăнлăха урăхла ăнланакан çын пулса тăраť", тенĕ Горький. Вĕсем чăнахах та çапла иккенĕ троцкисла-бухаринла бандитсене суд тунă чухне лайăх палăрчĕ.

Фашисла çынвĕлеренсем тус-йышсен маскине пĕркенсе, Горький пурăннă çурта кĕме пултарнăскерсем, Горький вĕсен маскине, куљтурă фронтĕнчи сăтăрçăсене, Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи тăшмансене тăрă шыв çине кăларнă пекех (Горький ача-пăча литератури çинчен çырнă витĕмлĕ статйисене аса илĕр), сирсе пăрахасран хăраса пурăннă. Вара троцкисла-бухаринла ирсĕрсем Горькийĕ вĕлерме хыпаланнă.

Горький вулакансене шпионсемпе провокатăрсен тĕнчине уçса кăтартакан „Кирлĕ мар çынăн пурнăçĕ" пек, „Тăшмансем", „Йулашкисем", „Вассă Железнова", „Клим Самгин" пек произведенисенче буржуази тискер кайăкланнине, унăн агенчĕсене, шпионĕсене, провокатăрĕсене Горький лайăххăн кăтартса параť. „Башкир бандит сурачаť" тенипе Горький художествăлă образпа кăтартса пачĕ. Ăна епĕр „Клим Самгин" кĕнекери Бердникăв сăн-сăпатĕнче лайăх куратпăр,—ку образ финанс капиталĕн бандичĕ империалисăм тапхăрĕнчи капиталисăмăн типлă представителĕ пулса тăраť. Повĕç геройĕ Клим Самгин хăй те империалисăм тапхăрĕнчи пушă, етемлĕх тивĕçĕнчен тухнă çынăн образне асаилтерет.

Троцкисла-бухаринла бандăри фашиссем çĕршыва сутас тĕлĕшпе, халăха улталас тĕлĕшпе тискер кайăкланса кайас йĕнĕпе Клим Самгинран та нумай иртсе карĕç.

Горькийе пуринчен ытла çавсем курайман. Вĕсен бандăла шайкин атаманне Иуда-Троцкине Горький пĕтĕм чĕререн курайман. Горький пĕтĕм фашисла лагĕрĕн хайар тăшманĕ пулнă. Горький буржуалă тĕнчен тискерлĕхне тăрă шыв çине кăларнă. Горький етем çинчен, унăн ăсĕ, ĕçĕ, телейĕ çинчен мухтавлă йурă çырнă. Горький Ленинпа Сталинăн тусĕ пулнă.

Çавăншăн ĕнтĕ ылханлă сылтăмлатроцкисла бандитсем ăна вĕлернĕ.

Епĕр пайан Горький çуралнăранпа 70 çул тултарнине паллă тăватпăр. Çак кунсенче те Горький пирĕнпе пулма пултарнă. Пирĕн çĕнтерўсемшĕн вăл мĕн тери хавасланнă пулĕччĕ. Троцкисла-бухаринла тискер кайăксене пĕтернине вăл ырланă пулĕччĕ. Пĕтĕм халăхпа пĕрле вăл паттăр папанинцăсене савăнăçлă кĕтсе илетчĕ, вăл вĕсене хыттăн ыталаса, вĕсем çине хăйĕн ăслă та тĕлĕнмеле витĕр куçĕсемпе тăранайми пăхнă пулĕччĕ.

Горькийĕ—ĕçлĕхлĕ çынна, пĕтĕм пурнăçне ĕçхалăх телейĕшĕн пурăнса иртнĕскерне, ĕçхалăхĕн генилĕ ывăлне фашисла çынвĕлеренсем, Горький каланле, „телейлĕхпе ĕçлĕхе тата канăçлăха" вĕлерекенсем, „пурнăçри мĕн пур телейлĕхе вĕлерекенсем"—Горькине тăван çĕр çинче хăй срукĕ туличчен пурăнма памарĕç.

Вăл вăхăтсăр вилчĕ, фашисăмпа кĕрешес ĕçĕн чи малти ретĕнче вăл Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин вилĕмсĕр ĕçĕсемшĕн кĕрешсе вилчĕ.

(ТАСС).

Горький тата Л. Н. Толстой 1900 çулта.

# Писатĕл-бойец

Çитмĕл çул кайала—1868 çулти мартăн 28-мĕшĕнче Чулхулари обойщчик Максим Пешков çемйинче ывăл ача Алексей çуралнă. Вăтăр çул иртнĕ хыççăн, пирĕн çĕршыв Алексей Пешкова, пролетарилĕ аслă писатĕл, хастарлă революционер, пĕрремĕш вырăс революцийĕ хавхалантарнă çил-тăвăл йăхравçи пулса тăнипе пĕлсе тăраť.

Горький çамрăклах вĕренесшĕн хытă çуннă, çын пек пурăнас правашăн кĕрешес хастарлăх пысăк пулнă. 1884 çулта 16 çулхи çамрăк ача Чулхулана пăрахса, вĕренме Хусана кайаť. Пурăнма укçа-тенкĕ çук пирки çырма-çатрасенче выртса тăрса, çамрăк ача йалти учитĕл пулма хатĕрленет. Хăйĕн пурнăçĕшĕн çине тăрса кĕрешсе, Алексей Максимăвич килкарти тасатаканра та, пахчаçăра та, булкăсем пĕçернĕ çĕрте те, театăрта хорист пулса та ĕçленĕ. Хусанта Максим Горький революцилĕ студентсен, рабочисен кружокĕсемпе çыхăнаť, марксисăмпа малтанхи хут паллашаť. Вăл кунта Чернышевский, Писарев, Адам Смит кĕнекисене тата Марксăн „Капиталне" вулаť. 1888 çулта хресченсем хушшинче революцилĕ пропагандă сарма Красновидăва йалне кайаť.

Унтан вара каллех çапкаланса çўресси пуçланаť, унчухне Горький Каçпи тинĕсĕнче пулă тытнă çĕрте йе каçхи хуралçă пулса, чукунçул çинче весовщик пулса ĕçленĕ. 1889 çулти çулла Горький Чулхулана кайала таврăнаť. Çак çулăн октабĕр уйăхĕнчех ăна арĕслеççĕ.—Вăл тĕрмере пĕр уйăх лараť.

1891 çулхи çуркунне Горький каллех Российă тăрăх çўреме тухса кайаť. Халăх мĕнле пурăннине, халăхра мĕнле вăй пуррине, халăх хăйĕн пурнăçĕ çинчен мĕн шутланине Горький хăй курса пĕлесшĕн çуннă. Атăл тăрăх Царицына çитиччен Украинă, Крым, Кавказ тăрăх кайса, вăл кĕркунне Тифлиса пынă. Тифлисре пĕр çулталăк пурăнни писателĕн пурнăçĕнче пит те паллă пулса тăнă. Кунта вăл, чукунçул мастерскойĕсенче ĕçлесе, рабочисемпе тачă çыхăнса кайнă, вĕсем хушшинче пропагандисла кружок организациленĕ.

1892 çулти çĕнтабĕрте Тифлисри „Кавказ" хаçатра Горькин „Макар Чудра" йатлă, чуралăха вилĕм сунакан çынсем çинчен пит те паха калавĕ пичетленсе тухнă.

Горькин литературăри паллă вырăнĕ хăвăрт ўсет. Атăл тăрăхĕнчи хаçатсенче, унтан столицăри хаçатсемпе журналсенче те унăн çĕнĕрен çĕнĕ произведенийĕсем курăнма пуçлаççĕ. Петербурга куçса килсен, Горький 1901 çулти марг уйăхĕнче, Хусан соборĕ патĕнче пулнă демонстрацийе хутшăнаť. Ун хыççăн часах „Жизнь" журналра хăйĕн тăвăл йăхравçи çинчен хунă чаплă йурри пичетлесе кăлараť, çак произведени çывхарса килекен революци тăвăлĕ çинчен каланă.

Ку вăл „Песня о Соколе" пекех чăн-чăн революцилĕ романтикăпа тулли пулнă. Çак произведенисен йăр-уçă сăнлăхĕсем вулакансен анлă массисемшĕн пит те уççăн ăнланмала пулнă. Революцилĕ романтикă Горькине пурнăçри чăнлăха хăйĕн чаплă произведенисене кĕртме пулăшнă.

Ку вăхăт тĕлне Горький революцилĕ çамрăксемпе рабочисем хушшинче пит те авторитетлă пулнă. Патша правителĕстви писателе „сийенсĕр" тумали майсем шырама тытăннă. Ăна Сормăвари рабочисем патне чĕнў çырнă тесе айăпласа арĕсленĕ, кун хыççăн полици сыхласа тăмала йĕркепе Арзамаса ссылка йанă. Ку та Горькине çĕмĕреймерĕ. Унăн пултарулă вăйĕ çăлкуç пек тапса тăнă.

1902 çулта Мускаври художествăлă театăр сцени çинче Горький çырнă „Мещане" тата „На дне" пйесăна лартаççĕ. Çак пйесăсем питĕ ăнăçулă пулнă.

Патша правителĕстви Горькине хĕсĕрлеме пăрахмасť. 1902 çулти февраљте Горькине хисеплĕакадемика суйласан, çак суйлава II-мĕш Николай патша çине тăнипе пăрахăçа кăларнă. Патша правителĕстви паллă писателе хирĕç киревсĕр ĕç туни малта пыракан интеллигенцине тарăхтарса йанă. Короленкăпа Чехăв писателсем тарăхса хăйсене панă хисеплĕ академик йатне йышăнма пăрахнă.

Ссылкăран столицăна таврăнсан, 1902 çулта Горький революцилĕ социал демократипе тата унăн Ленин йертсе пыракан „Искра" хаçачĕпе организацилĕ çыхăну тытассине пуçласа йараť. Малашнехи çулсенче Алексей Максимăвич революцилĕ кĕрешĕве хастарлăн хутшăнаť. Вăл революцийе бољшевиксемпе пĕрле алла-аллăн тытăнса кайаť, 1905 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнчи событисем çинчен прокламацисем çыраť, пурне те „Самодержавине хирĕç халех çине тăрса, пĕрле пулса кĕрешме" чĕнет. Мускавра декабĕр уйăхĕнче пулнă восстани вăхăтĕнче революцине хĕçпăшаллантарма пулăшаť; бољшевиксен партийĕ хушнипе, революцине пулăшма укçа пуçтарма Америкăна кайаť. Унта вăл хăйĕн пысăк произведенийĕсенчен пĕрне—„Амăшĕ" йатлă романа,—революцилĕ йухăмăн, бољшевиксен партин мухтавлă йуррине çыраť. Çак чаплă кĕнекене В. И. Ленин питĕ пысăк хак панă, вăл ун çинчен çапла каланă: „Кĕнеке кирлĕскер, революцилĕ йухăма нумай рабочисем ăнланмасăр, стихийăлă хутшăннă, халĕ ĕнтĕ вĕсем „Амăшне", хăйсене валљи пысăк усă илсе, вуласа тухаççĕ. Пит те вăхăтра тухнă кĕнеке".

1906 çулта Горький, политикă ĕçĕшĕн йутçĕршыва тарнă çын вырăнне пулса, Италире Капри утравĕ çинче пурăнма пуçлаť. Горький кунта та çĕнĕ произведенисем çырассине малала туса пыраť. Унăн чаплă повĕçĕсем—„Городок Окуров", „Жизнь Матвея Кожемякина",—пичетленсе тухнă. Вăл çав повĕçсенче мещанлă Российăпа унăн пĕтĕм хăрушлăхне кăтартса панă. Горький „Сказки об Италии" çыраť, унăн пайĕ „Звезда" хаçатра пичетленсе тухнă, ăна Ленин пысăк хак панă.

1907 çулти май уйăхĕнче Горький канашлакан делегат шучĕпе РСДРП-ăн Лондăнри сйесĕнче пулнă. 1908 çул-и йанвартен вара унпа В. И. Ленин хушшинче йаланах çыру çырса тăрасси пуçланаť. Ленин Горькине, унăн талантне пысăк хак панă, ăна партипе тачăрах çыхăнтарма тăрăшнă.

1913 çулта Горький бољшевиксен „Просвещение" йатлă журналĕн белетристикă пайне редакцилет. 1913 çулти декабĕрте Горький Российăна таврăнса, хăй тавра çамрăк пролетарилĕ-революцилĕ литературă вăйĕсене пĕрлештерме тытăнаť. Российăна таврăннă вăхăт тĕлне Горький хăйĕн пурнăçĕ çинчен „Детство" повĕçе çырса пĕтерет. Кайран, „В людях" тата „Мои университеты" произведенисене çырнă.

Октабĕрти Социалисăмла Аслă Революци патша Российĕнчи халăхсене ирĕке кăларчĕ, ĕççыннисен савăнăçлă, ирĕклĕ пурнăçĕ пуçланчĕ. Горький ĕççыннисен правишĕн çине тăрса кĕрешни сайа каймарĕ. 1918 çулта вăл çамрăк Совет республикин куљтурă строителствине хастарлăн хутшăнаť. 1921 çулта, Ленин çине тăрса пулăшнипе, Горький сывалма йутçĕршыва тухса кайаť, унта вăл 1928 çулччен пурăнаť. Çак тапхăрта „Мои университеты", „Дело Артамоновых" произведенисене тата „Жизнь Клима Самгина" романăн малтанхи кĕнекине çырса пĕтерет, шурă емигрантсем Совет çĕршывĕ çинчен елекленине хирĕç йутçĕршыв хаçат-журналĕсем урлă татăклăн кĕрешет.

Хăй 60 çул тултарнă тĕле, 1928 çулта, ССР Сойузне килсен, Горький,—чăн-чăн революционер бойец, пролетариатăн аслă писателĕ, хăйĕн пит те пысăк таланчĕн пĕтĕм вăйĕпе социалисăм строителстви не хутшăнаť. Унăн литературăпа общĕствăлă ĕçĕн çак тапхăрĕ „Егор Булычов и другие", „Василий Достигаев и другие", „Жизнь Клима Самгина" романăн çĕнĕ кĕнекисене çырнипе паллă пулаť. Çак вăхăтра вăл хаçат-журналсенче чаплă статйасем нумай çырнă, çав статйасен кашни сăмахĕ рабочи клас ĕçĕшĕн, коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме чĕнекен хăватлă вăй пулнă.

1930 çулта, „Промпартине" суд тунă кунсенче, Совет влаçне хирĕçле контрреволюцилĕ заговора хутшăннисем, çĕршывран кăларса сирпĕтнĕ фабрикантсемпе заводчиксен тарçисем, тĕнчери империалисăм агенчĕсем, рабочисемпе хресченсен сучĕ умĕнче тăнă вăхăтра, Горький „Тăшман парăнмасť пулсан,—ăна пĕтереççĕ" тесе хайар статйа çырчĕ.

Алексей Максимăвич хăйĕн чаплă пурнăçĕн малашнехи çулĕсенче обшĕствăлă-политикăлă ĕçе хастарлă хутшăнса ĕçленĕ. Совет писателĕсене пĕтĕçтерес, совет литературине çирĕплетес ĕçсемшĕн нумай вăй хунă. Вăл совет литературине аслă тапхăра тивĕçлĕ тăвассишĕн литературăри тăшмансене хирĕç кĕрешес ĕçе пысăк вăй хунă. Вăл аслă писатĕл, вăйлă художник, чыслă гражданин, „Граждăн вăрçин историне", „хапрăксемпе-савăтсен историне" çырас ĕçе Горький пуçарнă. Çак чаплă кĕн кесен страницисенче пирĕн çĕршыври ĕççыннисен паттăр та мухтавлă кĕрешĕвĕ йар уççăн курăнса тăраť.

Совет халăхĕ хăйĕн тивĕçлĕ ывăлне, Ленинпа Сталинăн сывăх тусне тата соратникне хĕрўлĕ йуратнă. Малала пыракан пĕтĕм етемлĕх Горькин ăслă та витĕмлĕ сăмахĕсене тимлĕн итленĕ. Тăшмансем унран хăранă, ăна курайман.

1932 çулта Амстердамра вăрçа хирĕç пулса иртнĕ конгреса йанă хăйĕн çырăвĕнче Горький пĕтĕм тĕнчери пролетариата, интеллигенцине, ĕççыннисем ĕмĕртен тăрăшса тунă куљтурăна çĕмĕрекен клас тăшманне хирĕç татăклăн кĕрешме пĕтĕм хăвата, пĕтĕм вăйа хума чĕннĕ. 1935 çулта Парижра пулса иртнĕ куљтурăна хўтлекен писателсен пĕтĕм тĕнчери конгресне те çавăн пекех хĕрўлĕ кĕрешўве чĕннĕ.

* * *

Аслă писателĕн ĕмĕчĕсем пирĕн çĕршывра пурнăçа кĕчĕç, пирĕн çĕршыври халăхсем Сталинла Конституци йалавĕ айне тăрса çĕнтерўлĕн коммунисăм патне малала пыраççĕ. Совет халăхĕ Горькин литературă пуйанлăхне хаклă тăракан алмаз пек, çивечрен те çивĕч хĕçпăшал пек сыхласа усраť.

# Каширин мещченĕн çурчĕ

Ĕлĕк Успенский урамĕ пулнă вырăнти çурт—Горькийчи чи паллă çурт. Хулана пачах пĕлмесессĕн те, ку района пырсассăн, есĕр тÿрех ним йăнăшмасăрах калатăр:

— Ку çурт Алексей Максимăвич Горький пурăннă çурт.

Ку çурта пиншер художествăлă картинăсемпе тата фото-ÿкерчĕксемпе ĕмĕр асăнмалах палăртса хунă. Ку çурта Горькин „Ача чухнехи“ произведенине вуланă çын лайăх пĕлме пултарать. „Урам вĕçĕнче шупка-хĕрлĕ сăрпа сăрланă, пусса антарнă лутра çийĕлĕ тата чалăшса кайнă чÿречесемлĕ çурт ларать“,—тесе çырнă çав çурт çинчен „Ача чухнехи“ произведенире.

Акă, икĕ çÿллĕ тайлăм хушшинче чăнкă та хĕсĕк тăкăрлăк, ку тăкăрлăкра чалăшса кайнă пĕчĕк çуртсем пĕр-пĕринпе таччăн çыпăçса лараççĕ. Акă, хăмаран тунă хапур. Пÿрт умĕнчи пĕчĕк пахчара пĕчченех хурама ларать.

Темшĕн, килкарти есĕр шутланинчен ирĕклĕрех пек туйăнать. Темскер çитмест. Çапла çав урапăсем кÿртсе лартмали сарай, тата килкартинче кĕтесре ларакан пир-авăр сăрламали çурт курăнмасть. Есĕр кĕçех: пир-авăр сăрламали çурт çунса кайнине аса илетĕр. Пĕрехинче Аљошăн асламăшĕ чĕркуçланса „чĕререн“ турăпа калаçнă вăхăтра аслашшĕ алăка пÿлĕмеле чари уçса йарса çинçешке сасăпа çапла каланă:

— Ну, амĕш, пирĕн пата турă килчĕ—çунатпăр!

... Пир-авăр сăрлакан çурт çук. Çавах килкартинче сăрламали чансем йăвалançа выртаççĕ. Килкарти урлă карнă канрасем çинче темле çĕтĕк-çатăксем типеççĕ.

Каширин çуртне, вăл малтан мĕнле пулнă, çавăн пекех туса хума тата ку çурта сыхлама, вата аталçăна, таçта та нумай çÿренĕ, нумай çулсем хушши аслă писатĕлпе чĕререн çыхăну тытса пурăннă тусне хушнă.

Аљошă Пешковăн ача чухнехи вăхăтĕнчи епохăн йăлине тĕплĕн пĕлсе, йуратса çав вăхăтри мещченсен килçурчĕсенче пулнă пур йапалисене те çак çурта пухнă.

Каширин çуртне ĕлĕкхи пек сăнсăпатлă тăвассинче А. М. Горький хăй те нумай пулăшнă. Йывăр чирленĕ вăхăтра та вăл çуртăн планне хут çине палăртса хума вăй тупнă, çуртăн йалти хучĕн уйрăмне палăртса Хитровский патне çапла çырнă: „Анне, Варвара Васильевнă, вырнаçнă“. Горький хăй ыйтнипе Хитровский çуртăн схемине туса ун патне йарса панă. Алексей Максимăвич хăйĕн шухăшне çырса памала пулнă. Хитровский Горькийрен ответ кĕтсе илеймен: аслă писатĕл çырăва илнĕ хыççăнах вилсе те кайнă.

* * *

Каширин çуртĕнче халăх туллийех. Унта пурне те пĕлме тăрăшакан ача-пăчасем тулнă. Вĕсем хăйсен йуратнă писатĕлĕн ача чухнехи пурнăçне вĕренме тата ĕлĕкхи тĕксĕм, тискер пурнăçа хаљхи савăнăçлă, телейлă пурнăçпа танаштарса пăхма пухăннă.

28-мĕш шкулри вĕренекенсем, „Пионерсен дворецĕнчи“ ачасем тăрăшса отзыв тетрачĕсем çине çыраççĕ: „Çак пĕчĕк çурт Алексей Максимăвич Горькийĕн „Ача чухнехи“ кĕнеки тăрăх пĕлнĕ Аљошă Пешковăн ача чухнехи пурнăçне кăтартса парать. Çак йапаласем çине пăхса, епĕр хамăрăн телейлĕ ачалăха Аљошăн йăвăр, хĕн-хурлă пурнăçне танаштарса, хамăр калама та çук чаплă ĕмĕрте пурăннине тепĕр хут туйса илетпĕр“.

Витрере, кĕтессе перĕнсе, хулăсем тăраççĕ, вĕсем вăрăм шăматкунсенче аслашшĕ çав хулăсемпе Аљошăна тата ытти ачисене йун тухиччченех хĕненĕ. Екскурçине пынă ачасем намăсла, чуна ыратаракан сарлака скамйе çине пăхса, тетрадсем çине çапла çыраççĕ: „Пире Горькине вĕрентнĕ пек мар, йăлтах урăхла вĕрентеççĕ. Çак розгăсене епĕр нихçан та курман. Епĕр хамăр ачалăхпа мухтанатпăр, пирĕншĕн Совет ачисен йуратнă тусĕ Сталин тăрăшать“.

Екскурçине йертсе пыраканăн нумай каласа пыма кирлĕ мар. Кунта пыракан çынсем хăйсемех пурне те лайăх курса ăнланаççĕ.

Акă кухњăри кăмака, ун çинчен Аљошă çав тери хăраса тĕлĕнсе асламăшĕ алçумаллинчен шыв йухтарса Йакку пиччен çапса ватнă пичĕ çинчи йунне йепле çуса тăкнине пăхса ларнă. Акă, урай хăми, Каширинсен çак тискер пурнăçĕнче Аљошăн тусне, ăна хÿтĕлекенни пулнă Иван Циганкă рабочийе, пиччĕшĕсем вĕлернĕ хыççăн йулнă йун хаљ те çав хăма çинче курăннă пек туйăнать.

Кухњăран аслашшĕн пÿлĕмне кĕмели алăк. Вăл пÿлĕмре пурте ытла та тирпейлĕ, йĕркелĕ те шутсăр кичем. Кантăксем çинче илĕртмен чечексем, стенасем çинче патшасен, митрополитсемпе купцасен портречĕсем, пысăк сăраççилĕ йăвăр замоксем, турăш, ун умне аслашшĕ йăланах лаша куçĕ пек турат куçлĕ пĕр урай хăми çине тăрса кĕл тунă. Аљошă кулленех аслашшĕ йепле хăйĕн туррине, сăнавлă ачашăн хăрушă та йĕрĕнчĕккĕн туйăнакан турăна кĕлтунине сăнанă.

Асламĕш пÿлĕмĕ. Аљошăшăн чи çывăх та хаклă çын пÿлĕмĕ. Пĕр чÿречелĕ пĕчĕк пÿлĕмре анлă „вĕри вырăн“. Унтах кĕтесре пĕр сÿнме пĕлмесĕр хĕрлĕ лампадă çунса тăрать. Аљошăшăн йит ăста чĕнтĕр çыхмали йĕпсем. Пысăк тукмаксемлĕ циферблат çинче чечеклĕ те вăрăм майăтниклă кивĕ сехет. Комод тĕлĕнче стена çинче кивĕ фотографисем, вĕсем хушшинче А. М. Горький хăйĕн çав тери паха та хумхантаракан „Амăшĕ“ повеçĕнче ĕмĕрлĕхе сăнласа хăварнă çамрăк Анна Кирилловнă Заломăвă картăчки те пур.

Курма пынă çын тĕттĕм те тĕксĕм çелнĕк витĕр килхушшине тухать, Ф. П. Хитровский килхапхи патĕнчи вырăна кăтартать,—кунта хÿме çумне тайантарнă хĕрес тăмала, тискер тăван пичĕшĕсем Цыганкăн масарĕ çине лартнă йеверлĕ тачка туналă пысăк йуман хĕрес тăрать.

Курма пынă çынсем çакăнта Горькин çамрăк чухнехи вăхăчĕпе уççăн паллашма пултараççĕ. Вăл историлĕ хаклă çурт пулса тăрать.

## Максим Горькине

Еп кунçулсен страницине уçап та,
Сана куратăп пурнăç „тĕпĕнче“;
Куççуљпеле пекарњăна чупатăн,
Пушмак çĕлетĕн Шчурăв патĕнче.

Йе Атăлăн хумне касса çÿретĕн,
Телей шыратăн Челкашпа пĕрле...
Ирĕк кунçул пулассине кĕтетĕн,
Ирĕк йурри йурлатăн çĕнĕле.

Сан чĕрÿпе сăрланнă хумлă тинĕс,
Павлуш йалав йăтни те—чĕререх.
Етемлĕхĕн вут-тăвăл йыхравçи ес,
Куççуљ шывне те тăвăл пек сирен.

Совет çĕршывĕ—çут рай пахчи йевĕр,
Вăл пулласа ес туйнă ĕлĕкех.
Çав тивлетре патвар ÿсетпĕр епĕр,
Çĕршыв йатне çĕклетпĕр çÿлерех.

Асар-писер тăшман пуçлать-тĕк вăрçă,—
Пурнас кунçулĕн вĕçĕ çитнипе,—
Çĕршывшăн тăрĕç пирĕн çамрăксем те,
Вĕсем кашнийĕ пулĕç Данко пек.

Максим Йастран.

## Горький кунĕсем ССР Сойузĕнче

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем А. М. Горький çуралнăранпа 70 çул çитнине литературă вечĕрĕсемпе, лекцисемпе, йатарласа тунă выставкăсемпе паллă тăваççĕ. Библиотекăсенче аслă писатĕлĕн произведенийĕсене илсе вулакансем çитĕ нумай.

* * *

МУСКАВ. Совет писатĕлĕсен Сойузĕ А. М. Горький йачĕпе тăракан пĕтĕм тĕнчери литературă институчĕпе пĕрле мартăн 28-мĕшĕнче пролетарилĕ аслă писатĕл А. М. Горький çуралнăранпа 70 çул çитнĕ йатпа вечĕр тăвать. Вечĕрта писатĕлсем: Всеволод Иванов, Павленкă, Фадейĕв, Сурков тата ыт. те тухса калаççĕ.

Мартăн 28-мĕшĕнче, А. М. Горький çуралнăранпа 70 çул тулнă кун, Мускаври Художĕствăлă театăрта Горькин „На дне“ пйесине лартаççĕ. Çакăнпа Художĕствăлă театăрта „На дне“ пйесăна 901 хут лартаççĕ. „Мещане“ пйесăн премйерĕнчен пуçласа, Художĕствăлă театăр Горькин пйесисемпе 1.200 спектаклњ лартса кăтартнă. Çав спектаклњсенче 1.200 пин çын пулнă.

* * *

АЛМА-АТА. Казахстан писатĕлĕсен Сойузĕ тата искусствă работникĕсем мартăн 28-мĕшĕнче Горький çуралнăранпа 70 çул тулнă йатпа пысăк вечĕр тăваççĕ. Писатĕлсемпе артиссем Алексей Максимăвич çинчен аса-илÿсемпе тухса калаççĕ, вĕсем казах тата вырăс чĕлхипе çырнă Горькин чылай произведенийĕсене вуласа параççĕ. Горькине асăнса çырнă çĕнĕ йурăна Казахстан халăхĕсен йурăçи-орденоносĕц Джамбул тухса калать.

## АМĂШНЕ ПЫТАРНИ

1938 çулти мартăн 11-мĕш. Кун хĕвеллĕ те уйар. Урамсенче, пÿртсен тăррисенче йур шуралса выртать, анчах сывлăшра—çуркунне.

Горький хулинче йăланах лăпкă тăракан Университет урамĕ кĕтмен çĕртен халăх шавĕпе тулчĕ. Çынсем хура йалавсем йăтса утаççĕ. Хĕрлĕ хура лентăпа чĕркенĕ чечек çыххисем йăтса пыраççĕ. Пурте тарăн шухăша кайса салхулăн утаççĕ.

— Кама пытараççĕ?—ыйтрĕ пĕр çамрăк çын.

— Амĕшне. Амăшĕ вилнĕ, ăнлантăн-и?..

— А-а ... Вăл хăшĕ-ха? Алексей Максимăвич çырса кăтартни-и?

—Шăпах çавă. Аннă Кириллăвнă...

Аннă Заломăвăна пытараççĕ. Унăн пурнăçĕ А. М. Горькишĕн—чи хаклă писатĕлшĕн „Мать“ йатлă вилĕмсĕр повăçне çырма витĕмлĕ образ пулнă.

Масар. Вилшăтăкĕ хĕрринчи тĕмеске çине шурă сухаллă старик хăпарать. Вăл малтан пухăннă халăха куçпа пăхса çаврăнать, унтан хĕвел çинче ылтăн саспаллисемпе йăлтăртатса тăракан йалавсене, вилшăтăкĕ умĕнче тăракан тăванĕсен хурлăхлă сăн-сăпачĕсене тинкĕрет, вара хуллен сăмах калама пуçлать:

— Йулашки хут пин çухрăмран килтĕм епĕ сан пата, манăн аннем! Епĕ санпа калаçма, хамăрăн социалисăмла аслă çĕршывăмăрăн амăшĕсемпе калаçма килтĕм. Епĕ саншăн хам чĕрем йунĕпе çырнă йулашки йĕркесене вуласа пама килтĕм..

Пухăннă çынсем çĕлĕксене хывнă. Шăплăхра кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн, старик малала калать.

... Шурă çÿçлĕ Петр Заломăв пухăннă çынсем çине тепĕр хут пăхса илет. Хĕрарăмсем пĕр-пĕрин çумне таччăн тĕрĕнсе тăраççĕ. Петр Заломăв вăл хĕрарăмсене пĕлет. Вĕсем—Сормăври работницăсем. Вĕсене пĕр-пĕринпе пурнăç тата кĕрешÿ çыхăнтарнă. Вĕсенчен нумайĕшĕсем унпа пĕрле стачкăсенче пулнă, хăшпĕрисем патша тĕрмисенче ларнă. Халĕ вĕсем Сталинла тапхăрта савăнса пурăнаççĕ.

Заломăв сăмахне малала калать:

Есĕ пысăк наградă илтĕн—санăн пурнăçу вырăс халăхĕн аслă писатĕлĕ Максим Горький çырнă „Мать“ романăн тĕп образĕ пулса тăчĕ. Санăн мухтавлă йатна епĕр кăна мар, пĕтĕм тĕнче ĕççынĕ асăнĕ. Амăшĕн йулашки çулĕсем, уйăхĕсем, кунĕсем лăпкă, телейлĕ канлĕхре иртнĕ. Амăшĕ хĕрĕсемпе, внукĕсемпе, правнукĕсемпе пĕрле пысăк, çĕнĕрен тунă пÿртре хăй 89 çул ĕлĕкрех пурăннă пĕчĕкçĕ, тĕссĕр йăвăç пÿртрен инçех мар туса лартнă пÿртре, лайăх йĕркеленĕ хваттерте пурăннă.

Аннă Кириллăвнă йулашки вăхăтра: „Райри пек пурăнатăп“ теме йуратнă. Райа вăл пĕтĕм çĕршыв пурăнакан, хăйĕн йуратнă ывăлĕ Петр, хăйĕн тепĕр ывăлĕ, пилĕк хĕрĕ, хăйĕн 30 внукĕ, 18 правнукĕ пурăнакан хаљхи телейлĕ пурнăçра курнă. Вĕсем пурте инженерсем, педагогсем, медработниксем.

Петр Заломăвăн хумханулă сăмахĕ вĕçнеле çывхарса пырать.—Есĕ, хаклă аннем, рабочи клас патша пусмăрне хирĕç кĕрешнĕ хăрушă кунсенче мана штыксем çине тирсе çĕклеме пултарнине пĕлсе тăнă, анчах „Тĕп пултăр самодержави!“ тесе çырнă хĕрлĕ йалава есĕ ху манăн алла тыттартăн. Амăшĕсем те ывăлĕсене тăрăшса пулăшнипе çеç рабочи клас çĕнтернĕ. Хăйар сехет килсе тухсассăн, социалисăм çĕршывĕн пĕтĕм амăшĕсем, санăн примерпа усă курса, хăйсен ывăлĕсемпе хĕрĕсен аллисене хăйсемех винтовкăсем тыттарĕç.

Канлĕн çывăр, манăн аннем. Есĕ хăвăн вăрăм, йăвăр, анчах мухтавлă çулна тÿрĕ чунпа утса тухрăн.

Ывăлĕ пуçне тайать, калаçма чарăнать. Чечек ăшне путнă йалавсем вилшăтăкĕ çийĕн тайăлаççĕ.

Горький хули, 1938 çулхи март.

## Максим Горький тата патша цензури

ЛЕНИНГРАД, мартăн 25, (ТАСС). Ленинградри политикă тата культурăпа йăла архивĕнче Горькине хирĕç патша цензури тунă „ĕççенчен“ чылайĕшĕ сыхланса йулнă. Вăл документсем пролетарилĕ аслă писатĕлĕн художествăлă тата драмăлă произведенисене патша чиновникĕсем мĕнле хĕссе пынине кăтартса параççĕ.

Сăмахран каласан, унта Горькин 1907 çулхи „Знание“ сборникре тухнă „Амăшĕ“ повеçĕ пирки цензурă комитечĕн „ĕçĕ“ сыхланса йулнă. 1907 çулхи августăн 3-мĕшĕнче Питĕрти суд палаттин прокурорĕ патне цензурă комитечĕ çыру йанă. Унта Горькине ответ тыттарма тата унăн сборникне арĕслеме хушнă. Вăл произведенийе цензурă комитечĕн членĕ Федăрăв çакăн пек характеристикă панă:

„Повĕçе вуланă чухне унта социалисăмла шухăшсем пуррине тата автăр хăй те повĕçре кăтартнă геройсемпе пĕр шухăшлине питĕ лайăх курма пулать. Хăй шĕкĕлчесе панă темă çине ун пек куçпа пăхнă пирки—повĕçĕн уйрăм вырăнĕсенче айăплă сăнар пуррăн туйăнать мана“. Питĕрти суд палати йышăннипе вара „Знание“ сборнике арĕслесе малала сарма чарнă.

1907 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче Горькин „Враги“ пйессине лартма цензурăран ирĕк ыйтнă. Ламкер хушаматлă цензăр хăйĕн шухăшне çакăн пек çырса панă:

„Ку сценăсем йăлтах пурлăхлă классене хирĕç вĕрентсе каланисем пулса тăраççĕ, çавăнпа ăна лартма ирĕк пама май çук“,—тенĕ.

Пичет ĕçне пăхакан комитет 1911 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче Мускаври суд палаттин прокурорне „Человек“ журналăн иккĕмĕш номĕрне арĕслеме тата вăл журнала кăларакана ытти политикă тĕлĕшĕнчен пичетлеме йурăхлă мар произведенисемпе пĕрле Горькин „Сказки об Италии“ произведенине пичетленĕшĕн ответ тыттарма хушнă. Çав йумахсенчен пĕринче Алексей Максимăвич Неапаљри трамвай служăщчисен забастовкине кăтартса панă пулнă.

*Максим Горький*

# СОКОЛ ÇИНЧЕН ХУНĂ ЙУРĂ

Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс, çыр хĕрринче йулхавлăн хапкаканскер,—тĕлĕрсе кайнă, уйăхăн кăвак йăлтрипе витĕннĕ инçетре вăл пĕр хускалмасăр шăпах выртать. Вăл, çемçескер те кĕмĕл пĕрчисемпе ерешленнĕскер, инçетре-инçетре кăнтăрăн сенкер пĕлĕчĕпе сыпăшнă та, çăлтăрсен ылттăн тĕррине те хуплайман мамăк пек кăтра, хускалми пĕлĕтсен тăрă йăрăмне тĕкĕр çинчи йевĕр çутатса, тутлăн-тутлăн çывăрать. Çыр хĕррипеле ыйхăлăн шăвăнакан канăçсăр хумсем мĕн çинчен пăшăлатса калаçине ăнланас тесе, пĕлĕтсем тинĕс çине ытларан та ытларах пĕшкĕнсе шăхнăн туйăнаççĕ. Пăрсăмсаран вĕрекен çилсем амантса хутлатнă йăвăçсемпе витĕннĕ тусем хăйсен тÿписене картах сулса пĕлĕтри сенкер пушхиреле çĕкленнĕ, вĕсен тĕксĕм кÿлепийсем, кăнтăр касĕн йăваш та ăшă тĕттĕмлĕхĕпе хупланнăскерсем, çаврашкан курăнаççĕ.

Тусем чаплă шухăша путнă. Вĕсенчен ÿкекен мĕлкисем симĕсĕн курнăкан илемлĕ хумсене тĕксĕмлентерсе тăраççĕ, çапла вара пĕртен-пĕр хусканăва, шыв сасăсăр шĕпĕлтетнипе кăпăксем ассăн сывланине тата ту хыçĕнчен тухма ĕлкĕреймен йăлтăрка уйăхăн кăвак кĕмĕлĕпе пĕрле пĕтĕм таврана саралнă ытарлă шăплăха хупласа хурасшăн пек.

— А-ала-ах-а-акабар!—тет шăппăн Надыр-Рагим-Оглы, ватă крым чăбанĕ, çÿлĕ, кăвакарнă, кăнтăр хĕвелĕпе çунса кайнă, тишшĕм те ăслă старик.

Епĕр унпа иксĕмĕр мĕлкепе витĕннĕ, мăкпа кĕççеленнĕ тăван ту хĕрринчен каталса ÿкнĕ пысăк чул умĕнче,—салхулă та хăмăр чул умĕнче, хăйăр çинче выртатпăр. Вăл чулăн тинĕс йенчи айакки çине хумсем шыв курăкĕпе тинĕс лăймаки сапса тултарнă, çав курăксемпе витĕннĕ чула тинĕсе тусенчен уйăрса тăракан ансăр хăйăр йăрăмĕ çумне çыхса хунă пек. Пирĕн кăвать çулăмĕ тинĕсĕн ту йеннели айаккине çутатать: çулăм варкăшса чĕтрекелесе илет, вара тарăп та çăра çуркаланчăксемпе каскаланса пĕтнĕ ватă чул тăрăх мĕлкесем чупаççĕ.

Епĕр Рагимпа хаљ çеç тытса хунă пулăран йашка пĕçеретпĕр, иксĕмĕрĕн те пирĕн кăмăлсем çемçелсе çитнĕ: пире пур йапаласем те йумахри пек, чунлă пек курăнаççĕ, пурин ăшне те кĕрсе пĕлме май пур пек туйăнать. Ун пек самантра чĕрере çăп-çăмăл та тап-таса, вара шухăшлас кăмăлсăр пуçне урăх нимĕнле кăмăл та çук.

Вĕçĕ-хĕррисăр тинĕс çыр хĕррине ачашланать, унăн хумĕсем, кăвать хĕррине ăшăнма йарăр тесе йăпаннă пекех, ачашшăн-ачашшăн шĕпĕлтетеççĕ. Вĕсен пĕр кĕвĕлĕн те килĕшÿлĕн йанăракан йурринче хутран-ситрен ытларах çĕкленекен чарусăртарах сасăсем те илтĕнеççĕ,—ку ĕнтĕ хумсенчен пĕри, хăйулăраххи, пирĕн çывăхах шуса çитрĕ.

Рагим, пуçне тинĕс йеннеле туса, хăйăр çинче ÿпне выртнă та, чавсаланса, пуçне аллисем çинче тытса тĕтрелĕ инçетеле тинкерсе пăхать. Унăн пуçĕнчи çăмламас така-тир çĕлĕкĕ ĕнси çине кайса ларнă, çÿлĕ те вĕтĕ-вĕтĕ пĕркеленчĕклĕ çамки çине тинĕс йенчи уçă сулхăнлăх варкăшса килет. Вăл епĕ ăна итленипе итлеменнине тĕпчемесĕрех, тинĕспе калаçнă пек, каласса выртать.

— Турра пăхăнса тăракан çын райа кайать. Турăпа пророка пăхăнманни вара? Тен, вăл ак çак кăпăкра... Шыв çинчи ав çав кĕмĕл тĕслĕ тĕрленчĕксем те тен вăлах... кам пĕлет?

Хăватлăн саралса кайнă тĕксĕм тинĕс çуталать, ун тăрăх вырăнăн-вырăнăн уйăх çинчен тирпейсĕрĕн тăкăннă йăлтăркасем сапаланса выртаççĕ. Уйăх тусен çăмламас тÿписем хыçĕнчен ишсе тухрĕ ĕнтĕ, хаљ вăл хăйне хирĕç йăвăррăн сывласа выртакан тÿлек тинĕспе ун çыранĕсем çине тата пирĕн умра выртакан пысăк чул çине хăйĕн çутине салхулăн сапалать.

— Рагим! Каласа пар йумах!—ыйтатăп епĕ старикрен.

— Мĕн тума?—ыйтать Рагим, ман йеннеле çаврăнмасăрах.

— Ахалех. Йуратататăп еп сан йумахусене.

— Еп сана йăлтах каласа панă ĕнтĕ... Урăх пĕлместĕп...

Хăйне тата йăлăнтарасшăн çапла калать вăл. Епĕ йăлăнатăп.

— Итлĕн-и, еп сана пĕр йурă каласа парам?—килĕшет Рагим. Манăн авалхи йурра итлес килет, вара вăл сăмахсене йурланă пек тăсса, йурăн хăйне май кĕввине те кăтартма тăрăшса, калама тытăнать.

I.

„Тусем çине çÿлтен-çÿле Хура Çĕлен шуса хăпарнă, унтан çăмха пек пулнă та нÿр шырлана кĕрсе вырнаçнă, тинĕс çине пăхса вăл выртнă.

„Çÿлте-çÿлте, пĕлĕт çинче йăлтăртатса хĕвел хĕмленнĕ, тусем вĕри сывлăшпала пĕлĕт тÿпинеле сывланă, тата çав тинĕс хумĕсем чулсем çумне çитсе арканнă...

„Шырлăнĕ тăрăх сĕм-тĕттĕм витĕр, чулсем çине шарлаттарса, тинĕселе çырма кĕрленĕ...

„Вăл вăйлăскер те харсăрскер, шапшурă кăпăк сирпĕтнĕ, хăйар сасăпа тулашăнса, тăва каса-каса тĕпретнĕ, унтан сиккипеле йухса тинĕселе сиксе шарланă.

„Çĕлен вырнаçнă çав шырланах, сасартăк, пĕлĕт тÿпийĕнченех, аманнă Сокол персе аннă. Кăкăрĕнчен вăл йун йухтарнă, тĕкĕсене йунпа пĕветнĕ.

„Кĕске сасă çеç кăшкăрашса, хыт çĕр çине персе вăл ÿкнĕ, вăйсăр çилле шăнараймасăр, кăкрипеле чулсем çумне пыра-пыра çапса йунланнă.

„Хура çĕлен шартах хăранă, вăртварт шуса тарма пуçланă, анчах часах туйса та илнĕ: аманнă кайăк ĕмĕрĕ иквиç самант çеç йулнă мĕн...

„Вара вăл шиклĕн те вăрахăн кайăк патнех шуса çывхарнă, унтан минтевлĕн чăшкăрса, вăл кайăка çапла каланă:

„— Е, вилтĕн-им?

„— Çапла, вилетĕп!—тенĕ Сокол, чунхавалне çĕклентересшĕн. Еп пурăнтăм мухтавлăн, чаплăн!.. Еп харсăр паттăр пек кĕрешрĕм!.. Телей пĕлеп еп!.. Пĕлĕте еп куртăм!.. Ăна нихçан ес çитсе кураймăн. Ех, есĕ, мĕскĕн!

„— Мĕнех-ха—пĕлĕт?—хăр-пушă вырăн... Пĕлĕт çинче йепле шăвам еп? Мана кунтах, çак çĕр çинчех те питех те канлĕ... нÿрĕ, ăшă...

„Хура çĕлен çапла каланă аманнă, ирĕк кайăка, унтах тата хăй ăшĕнче вăл çав кайăкран кулса çеç илнĕ.

„Унтан вара çапла шутланă: „хăть вĕç, хăть шу ес, паллах пĕр вилĕм, пурте вилетпĕр, çĕре кĕретпĕр, унтан вара çĕрсе пĕтетпĕр...

„Анчах та Сокол, харсăр кайăк, сасартăк йăлтах сиксе ÿкнĕ, кĕлеткине кăшт çĕклесе, йĕритавра куçне вылятнă.

„Хăмăр чулсем хушшипеле хаљ сăрхăнайса çеç шывĕ йухнă, сĕм тĕттĕм çыр шырланĕнче те чыхлантарас пек пăчă пулнă, çĕрĕк шăрши персе çеç тăнă.

„Вара аманчăк харсăр Сокол, чунхавалне пухса салхулăн, мĕн пур вăйпах çапла йанратнă:

„— О, пĕлĕте пĕрех хутчен çеç çĕкленейсе çитес пулсассăн!.. Вара унта тăшманăма та кăкăрăмри суран çумне еп пăчăртаса хĕстерĕттĕм!.. Хăйар тăшман ман йунăмпа чыхланайса çеç вилĕччĕ. О, ес, телей, çапăçу телейĕ!..

„Çĕлен вара çапла шутланă: „ку мĕскĕн кайăк йĕрет пулсассăн, чăнах та пĕлĕт çинче пулмашкăн питех те лайăх, питех аван-тăр?..

„Вара вăл ирĕк Сокол кайăк умне пырса çапла каланă: „çак çыр хĕррине пырса ес тăр та айалала йарăнайса пăх. Çунатусем сана тен çĕклĕç, вара каллех пĕрер самантлăх пĕлĕт ытамĕнче ес пурнăн“.

„Шартах чĕтренĕ хăйулă Сокол, мăнкăмăллăн сас тунă та, чĕрнисемпе аран-аран чулсем тăрăх чавкаланса, çыр хĕррине çитсе вăл тăнă.

„Унтан çунатсене сарса, пĕтĕм кăкăр туллин сывланă, вара, куçне йăлкăштарса,—айалала персе анайнă.

„Сÿлтен ÿкен чул йевĕрех, ту хысакĕсен çăмсахĕ тăрăх çапкаланса, вăл хăвăрт ÿкнĕ, çуначсене хуçа-хуçа, тĕкĕсене чал-пар вĕçтернĕ.

„Шарлаттарса йухан шыв хумĕ хăй ытамне ăна илейнĕ, чĕп-чĕр йунне çуса тасатнă, шур кăпăкпа йанкăслантарнă, унтан вара хăватлă йухăм тинĕселе ăна ăсатнă.

„Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕсĕн хутлам-хутламлă хумĕсем чулсем çумне çапăнайса, салху саспа йĕрсе шавланă... Вара çав тинĕс хуйхăлăн, хăйулă кайăк виллине илсе кайса куçран çухатнă.

II.

„Пĕлĕт çинчи ырлăхпала çак кайăк вилĕмĕ çинчен хура çĕлен, хăй шырланра выртa-выртa пайтах шутланă.

„Унтан чĕрчун куçĕсене телейпеле йăпатакан инçетеле вăл пăхнă та, сапăрланса çапла каланă:

„—Тÿпесĕр, тĕпсĕр пуш пĕлĕтре вăл мĕнех-ха курчĕ, вилнĕ Сокол? Мĕскер тума-ши вăл Сокол майлă чĕрчунсем, хăйсем, вилсен те, пĕлĕте вĕçме йуратнипех те, пирĕн чуна иментереççĕ? Мĕнех-ха пур унта вĕсемшĕн? Кăна еп хам та, пĕрер самантлăх пĕлĕтеле çĕкленейсессĕн, тĕппипелех пĕлме пултарăп.

„Каланă—тунă. Хура çĕлен ак сывлăшала сиксе ÿкейрĕ, вара хура хăйу манерлĕн, хĕвел çинче çиçсе вăл илчĕ.

„Шумашкăн пÿрнĕ—вĕçсе курайми! Çакна мансах вăл вĕçме пикенчĕ те чулсем çине персе çеç ÿкрĕ, анчах вилмерĕ, кулса çеç йачĕ...

„Ах, ак мĕнре вăл çÿле вĕçнийĕн тути-масийĕ! Вăл—ÿкнинче мĕн. Ку кайăксем питех те кулăш. Çĕре пĕлмесĕр вĕсем пурнаççĕ, çак çĕр çинчех салхуланаç те пĕлĕтеле кармашăнаççĕ, çÿлтен-çÿле вĕçме пăхаççĕ. Вара çав пуш вĕри тÿпенĕн ытамĕнче телей шыраççĕ. Унта хăр-пушă. Унта çап-çутă, анчах апат çук тата чĕр ÿтшĕн тĕрев тупаймăн. Мĕнех вара сапăрланас-ха? Мĕнех сăмах чĕртсе хăртас-ха? Унпа хăйсен ĕмĕтĕнчи ухмахлăха пийелесе çеç вĕсем çак пурнăçа тумашкăн йурăхсăрне витĕнтермĕ-и? Питех те кулăш. Анчах мана хаљ вăл сăмахсем тек улталаймĕç. Хамах пĕлеп еп, веçех пĕлетĕп! Еп пĕлĕт куртăм! Пĕлĕте еп вĕçрĕм ăна виçеймерĕм, ÿксе те пăхрăм, анчах вилмерĕм, татах та çирĕп хама ĕнентĕм. Çĕре савма пĕлменнисем çеç, ап тив, куултавпа пурнаççĕ. Чăна пĕлеп еп, тÿрре

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

## Колхозлă йал суйлавсене хатĕрленет

РСФСР Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе Оренбург облаçĕнчи Бугуруслан районĕнчи Наумовск йалсоветĕнчи агитаторсем массăлă ĕçе пысăккăн туса пыраççĕ. Йалта агитаци пунктне организацилерĕ. Кунта РСФСР Конституцине тата РСФСР суйлав саккунне вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ. Партире тăман агитатăр колхозник Шашков йулташ йертсе пыракан кружок заңатисене 52 колхозник пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Наумовск колхозĕ çывăхĕнче хĕл каçакан, вырăнтан вырăна куçса çÿрекен казахсем пуранакан вырăнсенче те кружок организацилерĕ. Партире тăман казах агитатăр Хайбулла Уразайĕв заңатисене йĕркелĕ иртерет. Вĕрентессе вăл казах чĕлхипе вĕрентет. Унăн кружокĕнче 30 çын.

(ТАСС).

## Казахстанра халăх перепĕçне хатĕрленеççĕ

Казахстанра Пĕтĕм Сойузри халăх переписне хатĕрленесси хĕрÿлĕн пырат. Халăх пурнакан пунктсенчи çынсен спискисене тăваççĕ. Республикăра пырса çÿреме йăвăр районсем те пур. Уң пек районсенче перепиçе ĕрукченех туса ирттереççĕ. Çавнашкал район вăл — Гурйев облаçĕнчи Жилкосинск районĕ пулат. Кунта ултă аулсовечĕ район центрĕнчен 250 километрта лараççĕ, тепĕр икĕ аулсоветĕнчи ĕççынисем йашăркка хăйăрлă çеçен хирте пĕр-пĕринчен 5—6 километрта пуранаççĕ.

(ТАСС)

## Хĕрлĕ Çарăн Тĕп театрĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче

Хĕрлĕ Çарăн Тĕп театрĕ пилĕк уйăх хушши ĕнтĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче ĕçлет. Вăл Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕйалавлă уйрăм Çарпа Лăпкă океан флочĕн бойецĕсене, командирĕсене, политработникĕсене тĕрлĕ спектакльсем лартса кăтартăт. Театăр спектакльсемпе концертсене крайри чи инçетри районсене кайса лартса кăтартат, вĕсене вунă пин çын курнă. Спектакльсем те, концертсем те пысăк ăнăçлăхпа иртеççĕ.

Театр ушкăнĕсенчен пĕри халĕхи вăхăтра Хабаровскра ĕçлет, тепĕр ушкăнĕ Благовещенскра хăйĕн ĕçне вĕçлет. Театăр лартса кăтартакан концертсемпе спектакльсене Комсомольск, Амур çинчи Николайĕвск хулинчи тата крайри ытти хулисенчи ĕççынисем те курмала.

(ТАСС).

## Испанири фронтсенче

Мартăн 25-мĕшĕнче Хĕвелтухăç фрончĕн пур районĕсенче те вăл хавçăсемпе интервентсен çарĕсем атакăсем тунă. Уескă районĕнче атакă тума пăлхавçăсене танксем, артиллери тата авиаци пулăшнă. Республиканĕцсем хытăн тăна-пулсан та, фашистсем малала кайса икĕ вăл йышăннă.

Республика истребителĕсем Осера районĕнче пăлхавçăсен çарĕсем çине пулеметсенчен пенĕ. Пăлхавçăсем чылайĕшĕ вилнĕ тата аманнă.

Центрти фронтра республикă çарĕсем Ел Кардосо йатлă йала (Мадридран çурçĕрелле) йышăннă.

(ТАСС)

## Испанири пăлхавçăсене пулăшма Германи çарсем йарат

Англин „Делйи Геральд" хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин регулярлă çар чаçĕсем 5 пин çын Испанин кăнтăр йенчи портĕсене — Кадикса тата Алхесирасса çитнĕ. Вĕсене Франко генерал вальли йанă. Çарсем илсе пыракан пăрахутсене Германин шыв айĕнчен çÿрекен çар киммисем хÿтлесе тăнă.

Испанин Еспань агенстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 25-мĕшĕнче Альмери заливĕ патĕнче Германин „Адмирал Шеер" йатлă броненосецĕ тата Германин икĕ миноносецĕ пурриме асăрхана. Вĕсен çумĕнче çичĕ суту-илÿ суднисем тăнă.

Çарсемпе вăрçă хатĕрĕсем тийенĕ суднăсем Майоркă утравĕ çине кайнă пулмала. Агентства: ку вăл, Германипе Италин çар карапĕсем сыхласа тăнипе грузсем тийенĕ суднăсен караванĕсем Испани çывăхĕнче курăнни пĕр хут çеç пулман,— тесе паллă тăват.

(ТАСС).

## Тройановский йулташ Нью-Йоркра сăмах туха калана

Нью-Йоркра пысăк митинг пулнă, унта Америкăри паллă деятелсем те хутшăннă. ССР Сойузĕн Америкăри полпредĕ Тройановский йулташ митингра „Совет Сойузĕ тата тĕнчери лару-тăру" çинчен сăмах туха калана. Тройановский йулташ сăмахне радио тăрăх панă.

Америкăри паллă писатĕл Ептон Синклер Пасадена хулинчен (Калифорни) митингри çынсене чĕнсе çапла калана: „Демократине сыхласа усрас тĕлĕшпе хальхи вăхăтра пĕр çĕршыв çеç тăрăшат, çав çĕршыв кирлĕ таранах пулăшу пама пултарас тĕлĕшпе унăн çине шанма пулат, вăл — Совет Сойузĕ. Халĕ демократи пурăннă чухне епĕ Америкăна Йевропăри тата Азири демократине хÿтĕлеме чĕнетĕп",— тенĕ.

## Сокол çинчен хунă йурă

*(Йулашки)*

пĕлетĕп. Вĕсен чĕнĕвĕсене ĕненмĕп. Çĕртен еп пулнă — çĕрпех пурнатăп.

„Çĕлен каллех çăмха пек пулнă сапăрланса мăнкăмăлланнă, пĕр чул çине туха вăл выртнă.

„Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕсĕ татах та çуттăн йăлкăшнă, хайар та шухă хумсемпе çыран хĕррисене кышланă.

„Вĕсен хăватлă шавĕнче мăнкăмăллă кайăк çинчен мухтав йурри йанранă: хумсем çитсе çапнипеле тем пысăкĕш чулсем чĕтреннĕ, хайар кĕвĕ йанравĕпе тÿпе пĕлĕчĕсем кисреннĕ:

„Харсăррисен чăрсăрлăхне мухтав йурри йурлатпăр епĕр!

„Харсăррисен чăрсăрлăхĕ — çапла вăл пурнăç ăслăхĕ. О, харсăр Сокол! Тăшмансемпе кĕрешнĕ чух йун йухтарса халран ес кайрăн... Анчах та пулĕ, çитĕ вăхăт,— ес хаң йухтарнă хĕрÿлĕ йунăн кашни кăварланан тумламĕ, пурнăç тĕттĕмлĕхне çурса, хĕлхем пек çиçĕ те, хăйулă, темчул хастар чĕресенчен çутăпала ирĕклĕхĕн антăхăнса ĕмĕтленен вĕри вутне чĕртсе кăларĕ.

„Ан тив, ес вилтĕн... Анчах та есĕ вăйлисемпе харсăррисенĕн йуррисенче ĕмĕр вилмесĕр, çутăпала ирĕклĕхĕн чĕррĕн йанран йыхравĕ пулăн.

„Харсăррисен чăрсăрлăхне мухтав йурри йурлатпăр епĕр!.."

Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕсĕн сĕт пек шурă инçечĕ шăпах; йурланă пек шĕнĕлтетсе, хăйăр çине хумсем çапăнаççĕ, тинĕсĕн инçечĕ çине пăхса епĕ те шăпах выртатăп. Кĕмĕл тĕслĕ тĕрленчĕксем ытларах курăнаççĕ шывра, уйăх çинчен çутă ÿкнипе... Пирĕн хуран вăраххăн вĕреме кĕрет.

Пĕр хумĕ выльакаласа çыран хĕринех куçса тухат те, вĕчĕрхентерес тенĕ пекех кĕрлесе, Рагим пуçĕ патнеле шăвăнат.

— Ăçта килетĕн?.. Пшла!— аллипе сулат вăл хум йеннеле Рагим, вара хумĕ, старик хушнине итлесе, кайалах тинĕсе кусса анса кайат.

Рагим хумсене чĕрчун вырăнне шутласа çапла аппаланни маншăн нимĕн чухлĕ те хăрушă мар, ни кулăшла мар. Йĕритаврала мĕн пурĕ пĕтĕмпех темĕнле чĕррĕн, çемçен, ачашшăн, пăхнă пек. Тинĕсĕ çав терийех тÿлек те лăпкă, вăл тинĕс кăнтăр шăрăхĕнчен уçăлса çитмен тусем çинеле пăхса сулхăнăн сывланинче çийеле туха çитмен темĕн чул хăватлă вăй пур пек туйăнат. Тĕксĕм-сенкер пĕлĕт çине çăлтăрсем темĕнле мухтавлă, чуна илентерекен, темĕнле халиччен пĕлмен туман çĕнĕ йапала килсе тухасса кĕтнĕ чухнехи пек ăсхакăла илентерекен ылтăн тĕрĕсем тĕрлеççĕ.

Пурте тĕлĕрет, анчах та хаң-хаң сиксе тăрас пек тинкĕрсе выртса тĕлĕрет,— пĕтĕм çут тĕнче тепĕр самантрах сасартăк хускалса кайса калама та çук тутлă сасăсен килĕшÿлĕ гармонийĕпе пĕрле йанăраса çĕкленессĕн туйăнат. Вăл сасăсем тĕнчен вăрттăнлăхĕсем çинчен каласа парĕç, вĕсем çинчен пирĕн тăна ăнлантарĕç, унтан вара çав тĕнчене, куçа çеç курнакан мĕлкелĕ вута сÿнтернĕ пек, вĕрсе сунтерĕç те чуна хăйсемпе пĕрле çÿле-çÿле, тĕксĕм-сенкер тÿпе уçлăхне илсе хăпартĕç, вара çав уçлăхран вĕлтĕртетсе тăракан çăлтăрсен тăррисем те çав сасăсене хирĕç çĕнĕрен уçăлнă тĕнчен тĕлĕнмеле музыки пек йанăраса тухĕç...

**И. ТУКТАШ** куçарнă.

Нйу-Рошелль хулинчи (Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем) шкулсенче вĕренекенсем Йапони таварĕсене бойкот тăвассинче активлă хутшăнса ĕçлеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шкулсенче вĕренекенсем Йапони таварĕсене бойкот тума чĕнекен листовкăсем пичетлеççĕ. Стена çинче „Йапонине бойкот!" текен плакат çакăнса тăрат.

(Сойузфото).

## Литва телеграф агентстви пĕлтерни

КАУНАС, мартăн 26-мĕш. (ТАСС.) „Лиетувос айдас" йатлă официоз (правителствă органĕ) Литва телеграф агентстви пĕлтернине пичетлесе кăларат. Унта: „Министрсен кабинечĕн составĕ улшăнни унăн политики принципĕ йенчен улăшăннине пĕлтермест. Кăна çĕнĕ кабинетра ĕлĕк премйер пулнă Тубйалис йулнипе те çирĕплетме пулат, хаң Тубйалис сывлăхĕ начарланса çитнипе, нумай вăхăтлăха отпуска кайнă.

Хальхи тапхăр çĕнĕ кабинет умĕнче тăракан çитес вăхăтсенчи задачсем çинчен те каласа парат. Литва обществĕннăçĕ çак кабинета, Тубйалис йертсе пынă чухнехи кабинета пулăшнинчен кайа мар пулăшассине шанса тăрапăр"— тесе калана.

## Литвари оборона министрĕн статйи

КАУНАС, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Оборона министрĕ Раштикис „Лиетувас-айдас" хаçатра: Литва правителстви Польшăн кÿр нтерекен ультиматумне йышăнмасăр тăма пултарайман, йышăнман пулсан пур-пĕрех вăрçă тĕлĕшĕнчен йăвăрлăхсем пулаччĕç,— тесе палăртат. Çакăн хыççăн лайăх мар шухăшсем хăварнине палăрса, Раштикис малала çапла калат: „вăйпа ирĕксĕрлени туссен çуратса паманнине тата вăйпа ирĕксĕрленипе кăмăллă пулманнине кашнийĕх пĕлме тивĕçлĕ", Растикис мĕн пур хăрушлăхсенчен сыхланма тата хальхи правителствă тавра халăхсен пур сийĕсене те пĕтĕçтерсе, Литван никама пăхăнса тăман ирĕклĕхне сыхлама хатĕр пулма чĕнет.

## Фашисла реакци аскăнни

Фашисла Германи хăйĕн ĕçĕсенче, требованийĕсемпе планĕсенче ытларах та ытларах чарусăрланса, чăрсарланса пырат.

Австри — хăйне тĕллĕн уйрăм çĕршыв пулнăскер — хаң ĕнтĕ урăх пурăнмаст. Фашисла Германи хушнă тăрăх Польшă Литва умне ультиматум тăратрĕ.

Польшă çарĕсем, Литва чикки патне илсе пырса тултарнăскерсем, хăратнипе Литва Польшă требованийĕсене йышăнчĕ.

Италипе Германи интервенцийĕ Испанире хытăн вăйланса пырат.

Чехословакине те тÿррĕмĕнех хăрушлăх хăратса тăрат. Германин Австрине ăсатнă çарĕсен пысăк пайĕ хальхи вăхăтра Австрипе Чехословаки чиккинче пуçтарăнса пыраççĕ. Кунта вăскасах çĕнĕ укрепленисем тата аеродромсем тăваççĕ.

Германи фашисĕсем Австрине туртса илнĕ хыççăн Чехословакири Генлейн йертсе пыракан фашисла парти (Судет-нимĕçсен партийĕ, вăл Германи фашисăмĕн Чехословакири тÿрĕ агентури пулса тăрат) хăйĕн активлăхне хыттăнах вăйлатнă. Çак парти Чехословакине хирĕç хыттăнах кампани туса пырат, вăл тата Судет-нимĕçсен облаçне Германи çумне пĕрлештерессн çинчен уççăнах требовани каларса тăртат. Гитлерла агентура хĕснипе çак кунсенче Генлейн парти çумне нимĕçсен аграрлă партийĕ, нимĕç ремесленникĕсемпе сутăçсен партийĕ пĕрлешнĕ.

Германи хальхи вăхăтра Данине хăратса тăрат. Нумайах пулмаст Гитлер Дани государствинчи фашиссем патне хăйĕн саламне йанă. Гитлерла хаçатсем Дани государствин чиккин икĕ йенче те „Германипе Дани хушшинчи чикĕне тÿрлетме" кирли çинчен уççăнах çыраççĕ. Гитлер кашни вăхăтрах мĕнле те пулин провокаципе усă курса, Дани территорийĕн пĕр пайне туртса илме пултарнине Данире кĕтсех тăраççĕ.

Анчах та йулашки çулсенче пулнă событисем çапла кăтартса парĕç: лăпкă самана кунçулне фашиссем мар татса параççĕ. Халăхсем фашисăма хирĕç, вăрçăна хирĕç çĕкленеççĕ, лăпкă саманан кунçулне татăклăн татса паракансем — вĕсем пулĕç.

## КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Шаньси провинцин кăнтăр пайĕнче тата Хенань провинцин çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем Йапонин уйрăм колоннисем çине кашни кунах пырса тапăнаççĕ. Йапонин çарĕсем çав районра пин çынна йахăн вилнĕ. Йапони çарĕн шухăшсăкăмăлĕ кунран кунах начарланса пырат.

Йапони командованийĕ, Шанхай — Нанкин районĕнчи партизансене хирĕç кĕрешме тесе, карательнăй експедицисем тунă. Анчах вĕсем нимĕнле результат та паман. Ку районра партизансем 100 пин çын шутланаççĕ.

(ТАСС).

### КИТАЙ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔ

Китай авиацийĕ йулашки вăхăтра Вăтам Китайра час-часах Йапони позицисем çине тапăнат. Мартăн 19-мĕшĕнче Китай самольочĕсен ескадрильйи Ханчжоу районĕнче Йапони аеродромĕ çине бомбăсем пăрахса, Йапонин виçĕ самольотне йăлтах пĕтернĕ. Йапони летчикĕсем 12 çын вилнĕ.

Мартăн 25-мĕшĕнче Китайăн 12 самольочĕ Шаньдун провинцинче Линчен йатлă хула çине бомбăсем пăрахнă. Çакăнтан таврăннă чухне Китай самольочĕсем сывлăшра Йапонин 20 самольочĕпе тĕл пулнă. Çапăçу пуçланса кайнă, Йапонин пилĕк самольотне персе антарнă.

(ТАСС).

## Коньухсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелемеле

Çураки çывхарса килнĕ май лашасене лайăх пăхмала. Ырхантарах лашасене йăвăр ĕçе кÿлмесĕр уйрăм апат çине тăратмала. Лашасене çуракине самăр кăларни — вăл çуракине кĕске вăхăтра иртерсе, пысăк тухăçлă тырпул туса илме май парат. Анчах çакна чылай колхозсенче пайанхи куна çитсе те ăнланса илмеççĕ-ха. Ырхан лашасене уйрăм апат çине тăратмаççĕ. Пĕтĕ кĕсресене йăвăр ĕçе кÿлсе хăм пăрахтарни те пулкалат. Коньухсем выльăх апатне тирпейлĕ тыткаламанни, витесене таса тытманни, лашасене тасатманни, вăхăтра апат паманни, шăварманни сахал мар пулат.

Нискассинчи „Ударник" колхозра (Тутаркас р.) коньухсене ĕçкÿнĕсем пĕр пекех шутласа параççĕ. Правленинче ĕçлекенсемпе пахалăх комиççийĕсем лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслемеççĕ. Лайăхрах чупакан лашасене кашни куллеех кÿлеççĕ. Ырхан лашасемпе пĕтĕ кĕсресене йăвăр ĕçрен хăтарса, уйрăм апат çине тăратман.

Ишлей районĕнчи „Хĕрлĕ Танк" колхозра та ĕç лашисене калама çук начар пăхаççĕ. Лаша кÿлмели таврашсене йусаман пирки, чылай лашасене суранлатнă. 2-мĕш бригадăра „Чахун" йатлă лашана алла мĕн лекнĕ çавăнта кÿлсе ĕçе йурăхсăра кăларнă. Çавнăшкалах 3-мĕш бригадăра та „Малышкă" тата „Сынок" йатлă лашасене стройран кăларнă. 1-мĕш бригадăра „Машка", „Дочка" тата „Ласов" йатлă кĕсресене йăвăр ĕçе кÿлнипе хăм пăрахтарнă. Коньухсем лайăх пăхманнипех икĕ çулхи тыха урине хуçнă. Бригадир Лыкăв йулташ хăй лашапа çуренине шута илтермест.

Йекĕмушкĕнĕнчи (Йетĕрне р.) колхозра та лашасем çине çийелтен пăхаççĕ.

Колхозра мĕн пурĕ те 20 пуç кÿлмели лаша шутланса тăрат пулсан, 5 лашине ывăнтарнă, 15 лашине суранлатнă.

Çавнашкалах Ыхра Çырминчи (Вармар р.) „Делегаткă" колхозра та лашасене начарлатса йанă. Çураки çывхарса килет пулин те, ака вăхăтĕнче тăрантарма посыпкă авăртса хатĕрлемен.

Йепреç районĕнче нумай колхозсенче лайăх пăхманнипе чылай лашасем чирленĕ. „Завет Ильича" колхозри 5 кĕсрене йăвăр ĕçе кÿлнипе хăм пăрахтарнă.

Участкăри зоотехниксем колхозсенчи ĕç лашисене мĕнле пăхнипе интересленмеççĕ. Çуракине хатĕрленнĕ май çакăн пек çитменлĕхсемпе çине тăрса кĕрешсе, лашасене мăнтăр кăларассишĕн тăрăшмала.

## Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене çыранаççĕ

ШĂХАСАН. Тури Сурăмри вĕрену пунктĕнче вĕренекен допризывниксем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене 200 тенкĕлĕх çыранчĕç.

**Йеремейĕв.**

ШĂНКĂРТАМ. ПСК(б) Парти райкомĕнче тата комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне 100 тенкĕлĕх çыранчĕç. Çавăн пекех ытти учреждениесенче ĕçлекенсем те массăлăн çыранаççĕ.

**Кужикăв.**

ШУПАШКАР. Чăвашсен коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне 4.145 тенкĕлĕх çыраннă. Уйрăм çынсем: студентсенчен — М. П. Красновпа Йелакина 25-шер тенкĕлĕх, преподавательсенчен — Леонтйĕвпа Игнатйĕв 40-шер тенкĕлĕх çыранса илчĕç. Халĕ 1.200 тенкĕ пухса государствă банкне хывнă.

**Г. Иванов.**

Мартăн 26-мĕшне Шупашкарта Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене 56.000 тенкĕлĕх сарнă. Уйрăмăнах Заготзерно çумĕнчи Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕ, массăлă-политикăлă ĕçе анлăн организациленипе, лотерей билечĕсене ăнăçлăн сарат. Мартăн 26-мĕш тĕлне ку организаци 600 тенкĕ государствă банкне хывнă, билетсене илнисем татах та пур. Калинин урамĕнчи Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕ 250 тенкĕлĕх сарнă.

Ответлă редактăр **Н. М. СЕМЕНОВ.**


**Академи театрĕнче**

Мартăн 28-мĕшĕнче

**Чăвашла спектакль**

**М. ГОРЬКИЙ**

**„НА ДНЕ"**

(4 пайлă)

**Художествă руководителĕ Йе. А. ТОКМАКОВ лартат.**

**Художник Н. Ф. БЙАКОВ.**

Талон № 15.

Абонемент № 8 талон № 12.



**КОЛХОЗСЕНЕ ПĔЛМЕ**

Выльăх-чĕрлĕхе, аш-какайа Чăвашсоюза, Выльăх хатĕрлекен тата Аш-какай хатĕрлекен организацисене договорсем тăрăх сутакан колхозсем вальли Чăвашсойузăн Канашри базине „ГАЗ" системăлă 1,5 тоннăлă 20 грузовик килнĕ.

Кунсăр пуçне апрел уйăхĕнче çак таварсем килеççĕ: суртлă тимĕр 32 тоннă, строителства вальли тимĕр пăта 32 тоннă, пралук 3 тоннă, хуçалăхра кирлĕ сăнчăрсем 2 тоннă. Касса хатĕрленĕ вăрман — чăмăр йăвăç 100 кубла метр, заводра çурнă йăвăç 125 кубла метр, фанерă 15 кубла метр, çурт çине витме заводра туса хатĕрленĕ хулăн хут (толь) 550 чĕрке; велосипедсем 100 штук, велосипед камерипе покрышки 600 штук.

**Таварсене сутмали йĕрке:**

Таварсене выльăх-чĕрлĕх, аш-какай сутнин 50 проц. чухлĕ хаклăх шутласа параççĕ.

СĂМАХРАН: Пĕр грузовик илме колхозăн 11525 тенкĕлĕх выльăх-чĕрлĕх йе аш-какай памала.

Таварсене илнĕ чух колхоз председателĕн хăйĕнпе пĕрле çак хутсем пулмала: выльăх йе аш-какай хатĕрлев пунктĕнчен йе Чăвашсойузăн хатĕрлев кантурĕнчен илнĕ выльăх-чĕрлĕх йе аш-какай сутнине кăтартакан квитанци, çак организацисемпе тунă договор тата тавар илме шантарса панă хут автомашинăсене Чăвашсойузăн Канашри базинче çеç параççĕ, ытти тĕрлĕ таварсене райсойузсем, урлă сутаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе, аш какайа государствăна сутма договор тунă колхозсем, хăвăр тунă договора пурнăçласа кирлĕ таварсене илсе йулма тăрăшăр!

*Чăвашсойузăн хатĕрлев управленийĕ.*



**Чăваш АССР Йустици халăх комиссариачĕ йуридически курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.**

***Курс виçĕ уйăхлăх пулат, унта нотариус работникĕсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.***

Курса арçынсене тата хĕрарăмсене 23 çулхисенчен 40 çулхисем таран, 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курса вĕренме илнĕ чух малтан 7 çул вĕреннĕ программă тăрăх вырăс чĕлхипе, математикă тата обществоведенипе испытани тăваççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен Чăваш АССР Йустици халăх комиссариатне зайавленипе пĕрле çирĕплетнĕ автобиографи тата çакнашкал документсене памала:

1. Вĕренни çинчен
2. Миçе çулхине кăтартакан хут
3. Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ хут
4. Судпа айăпланманни çинчен
5. Йулашки вырăнта ĕçленĕ çĕртен отзыв
6. Икĕ фотокарточкă
7. Паспорт тата çар билетне хăйпе пĕрле илсе пымала.

Зайавленисене 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Испытанисем апрелĕн 7-мĕшĕпе 9-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Заңати 1938 ç. апрелĕн 10-мĕшĕнче пуçланат.

Испытанине чĕннĕ хыççăн çеç килме йурат.

Курса илнисене стипенди 200 тенкĕ кашни уйăхра парса тăраççĕ, общежити пур тата выртса тăмалли йапаласем параççĕ.

*Адрес: Шупашкар хули, ЧАССР; Хĕрлĕ площадь, № 24.*

*Йустици халăх комиссариачĕ.*

3—3


„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 155. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.